чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ХЫПАР

"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

240 /26395/№ Юн кун, 2013, раштав (декабрь), 18 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

Халăх пурнăçне лайăхлатасси – тĕп тĕллев

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕсем

Республика парламенчĕн ĕнер иртнĕ 17-мĕш сессийĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Патшалăх Канашне янă Çырăвĕпе паллаштарчĕ.

Çыру текстне «Хыпар» туллин пичетленине кура унта çĕкленĕ темăсем çинче пайăрăн чарăнса тăни кирлĕ мар-тăр – ăна итлеме хутшăннисем республикăн социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн ыйтăвĕсене тĕплĕн те анлăн çĕкленине палăртаççĕ. Республика экономикине инвестицисем хывассинчен пуçласа вĕрентӳпе сывлăх сыхлавĕн, спорт ыйтăвĕсем таранах – пур енĕпе те халĕчченхи ĕçе хакласа малашлăх тĕллевсем палăртнă. Çапах иртнĕ çулсенчи çырусенчен уйрăмми те пур: Михаил Васильевич культура ыйтăвĕсем çинче пайăрăн чарăнса тăчĕ. Çав шутра – чăваш чĕлхин, йăли-йĕркин шăпи-пуласлăхĕ. Хăйне евĕрлĕ самант: Çырăвăн самай вăрăм çак сыпăкĕпе Михаил Игнатьев чăвашла паллаштарчĕ. Халăхăмăрăн Çырăва кĕртнĕ ваттисен сăмахĕсене чăвашла калани пулнă, анчах кунашкалли – пуçласа.

Сессие Патшалăх Канашĕн депутачĕсемсĕр пуçне РФ Патшалăх Думин депутачĕ Валентин Шурчанов /Думăри хисеплĕ ытти ентеш те, пирĕн РФ Федерации Пухăвĕн çӳлти палатинчи сенаторсем те темшĕн курăнмарĕç/, ĕç тăвакан влаç органĕсен, федерацин территори органĕсен, муниципалитетсен ертӳçисем, тĕн конфессийĕсен пуçлăхĕсем, общество ĕçченĕсем, предприятисемпе организацисен, массăллă информаци хатĕрĕсен ертӳçисем хутшăнчĕç. Республика Пуçлăхĕн сехет те вунă минута тăсăлнă вулавне Чăваш наци телекуравĕ, «Раççей 24» канал, Наци радиовĕ, «Тăван радио» эфирĕнче тӳрремĕнех трансляциленине кура, паллах, интересленекен кашни çын итлеме пултарчĕ. Сăмах май, республика Пуçлăхĕ Патшалăх Канашне яракан çулленхи Çырупа паллаштарнине телекурав тепĕр хут кăтартĕ: «Раççей 1» телеканал – раштавăн 19-мĕшĕнче 9 сехетре, «Раççей 24» – раштавăн 22-мĕшĕнче 19 сехет те 30 минутра.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Патшалăх Канашне янă Çыру

Хаклă ентешĕмĕрсем, хисеплĕ депутатсем, хăнасем!

Хамăн Çырура эпĕ, йăлана кĕнĕ пекех, влаç органĕсемпе обществăн уйрăмах тимлĕ пăхмалли тĕп самантсем, çавăн пекех çывăх вăхăтрах пирĕн пĕрле татса памалли тĕллевсем çинче чарăнса тăратăп.

2013 çул вĕçленсе пырать. Республикăшăн вăл çăмăлах мар, çапах та, пĕтĕмĕшле илсен, ăнăçлă пулчĕ.

Ăна Раççейре Тăван тавралăха хӳтĕлемелли çулталăк тесе палăртнине эсир пурте пĕлетĕр ĕнтĕ. Юлашки виçĕ çул хушшинче çут çанталăка сыхлас енĕпе йышăннă мерăсене пула кăçал вăрманта, типĕ çанталăка пăхмасăр, пĕр пушар та тухмарĕ.

«Интерфакс-ЭРА» агентство туса хатĕрленĕ бизнесăн никĕсри тухăçлăхĕн тата экологи яваплăхĕн рейтингĕнче Чăваш Ен Раççейĕпе пĕрремĕш вырăн йышăннă. Асăннă рейтинга тăвакансем палăртнă тăрăх – пирĕн республика бизнесăн экоэнергетика тата технологи тухăçлăхĕпе, тухăçлăх ӳсĕмĕн пысăк хăвăртлăхĕпе тата уççăнлăхĕпе палăрса тăракан регион шутланать.

Пысăк тухăçлăх тата уççăнлăх – хамăр ĕçе йĕркелемелли икĕ тĕп принцип. Эпир çакна виçĕ çул каялла пĕлтертĕмĕр тата çавăнтанпа ăна çирĕппĕн пăхăнса пыратпăр.

Патшалăх влаçĕпе граждан обществи пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлессине лайăхлатма, влаç органĕсен ĕç-хĕлне общество енчен тĕрĕслесе тăрассине вăйлатма этем, ача прависемпе ĕçлекен тата предпринимательсен прависене хӳтĕлес енĕпе ĕçлекен уполномоченнăйсен институчĕсене туса хунă. Маларах, 2011 çулта, Чăваш Республикин Общество палатине йĕркеленĕччĕ, вăл коммерцисĕр общество организацийĕсен ĕç-хĕлне пĕрлештерсе тăракан площадка пулса тăчĕ.

Республикăри ĕç тăвакан влаçăн мĕн пур органĕнчех Общество канашĕсем туса хунă. Вĕсем йышăнусен проекчĕсене сӳтсе явма хастаррăн хутшăнĕç, тӳре-шара ĕçне республикăра пурăнакансен нушисемпе тата ыйтăвĕсемпе çывăхлатма пулăшĕç тенĕччĕ. Çак тĕллевĕн пĕр пайне пурнăçланă. Анчах та палăртса хăварма тивет: пĕтĕмĕшле илсен – Общество канашĕсен членĕсем шухăшлав сӳрĕклĕхĕнчен, ĕçе ячĕшĕн тунинчен, пысăк вырăнти тӳре-шара умĕнчи хăюсăрлăхран хăтăлса пĕтеймерĕç.

Ăнланмалла: илсе кăтартнă тĕнче курăм паллисем вăрах вăхăт йĕркеленсе çирĕпленнĕ тата демократи йăли-йĕрки пулманран вĕсенчен хăтăлма пĕрре те çăмăл мар. Анчах та çакна тумаллах. Унсăрăн пирĕн граждан обществи енне выртакан çулпа ытла та вăрах вăхăт утма тивĕ.

Паян республикăри ĕç тăвакан влаç общественноçпа – политика партийĕсемпе, общество организацийĕсемпе, прессăпа – уççăн каласма хатĕр. Сăмахран, çак Çырăва хатĕрленĕ тапхăрта Граждансен пуçарăвĕсемпе ĕçлекен комитет представителĕсем ман пата Интернет сетĕнче Чăваш Ен Министрсен Кабинечĕн ларăвĕсен тӳрĕ трансляцине йĕркелес сĕнӳне тухрĕç. Общество ĕçĕн хастарĕсен шухăшĕпе – çакă влаç органĕсен ĕç-хĕлне халăха уççăн кăтартассине тивĕçтерме кирлĕ. Кунта нименле чăрмав та курмастăп. Министрсен Кабинетне çак ыйтăва 2014 çулхи кăрлач уйăхĕнчех татса пама хушса хăваратăп.

Пĕтĕм çивĕч ыйтăва çавăн пек çăмăллăн та хăвăрт татса пама май килсен, тем пек лайăх пулмалла. Анчах та чăн пурнăçра апла мар. Ытларах чухне влаç общество ĕçĕн хастарĕсен пуçарăвĕсене асăрхамасăр тăма тăрăшать, пуçару тăвакан хастарсем хăйсем те вĕсене пурнăçлас тесе хытах çине тăмаççĕ. Шел те, йăла шайĕнчи ăнланулăхра çаплипех мĕн те пулин пĕлтерĕшлине тума хистекен идеологи мар, янттине кĕтмелли шухăшлав пуç пулса тăрать, вăл вара вырăнти хăй тытăмлăха аталантарма, граждансене хăйсен прависемпе ирĕклĕхĕсене пурнăçлама чăрмантарать.

Нумай общество организацийĕ хут çинче кăна шутланса тăрать, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ вара ытларах чухне тĕрĕслекен органсене отчетсем çырса панинчен малах иртмест. Çуртйĕр комитечĕсен те ытларахăшĕн ĕçĕ курăнсах каймасть. Мĕн пур шайри влаç органĕ нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакансен çăхавĕсемпе тулса ларнă, çав вăхăтрах асăннă çуртсенчи пĕрлехи пухусен пур пек полномочийĕсем управляющи компанисемпе сиксе тухакан кирек мĕнле тавлашуллă ыйтăва та татса пама май параççĕ.

Эпир граждансен хастарлăхне ӳстерес, вĕсене хăйсем пурăнакан территорисене тытса пырас ĕçе явăçтарас, пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса панă çĕре хутшăнас тата вĕсене пурнăçа кĕртес енĕпе тăвакан общество пуçарăвĕсене е проекчĕсене пурнăçлама пулăшма хатĕр. Министрсен Кабинечĕн, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен хăйсен ĕçĕнче усăллă çĕнĕ идейăсемпе сĕнӳсене йĕркелеме, çавăн пекех влаç тăвакан йышăнусене общество енчен тăвакан экспертиза тухăçлăхĕпе пахалăхне ӳстерме пулăшакан краудсорсинг принципĕсемпе тата инновăци технологийĕсемпе анлăрах усă курмалла.

Пурте лайăх пĕлетпĕр: Чăваш Енре çĕр кăмрăкĕн, нефтьпе газ запасĕсем çук, пирĕн çĕр айĕнчи хутлăхсенче хаклă тĕрлĕ металл е алмаз упранмасть. Республикăн социаллă пурнăçпа экономикăн хăвăрт аталанăвне çынна хывакан инвестицисем шучĕпе кăна тивĕçтерме пулать. Çавăнпа та тĕллев – республикăра пурăнакан кашни çын хăйĕн вăй-халĕпе туллин усă курма пултармалли лайăх хутлăх тăвасси.

Хисеплĕ ĕçтешсем!

Пирĕн тĕп тĕллев – халăхăн пурнăç пахалăхне лайăхлатасси.

Çывăх вăхăтри виçĕ çул валли республика бюджетне йышăнса хăварнă. Ун шайĕнче мĕн пур тĕп сферăри ĕçхĕлех пырса тивекен Чăваш Республикин патшалăхăн 15 программине, çав шута 69 çум программа та кĕрет, пурнăçлама палăртнă. Раççей Федерацийĕн Патшалăх Канашĕн кăçалхи юпа уйăхĕнчи ларăвĕнче çĕр-шыв Президенчĕ Владимир Владимирович Путин Чăваш Ене бюджет тăкакĕсене программа принципĕпе йĕркелекен Раççейри чи лайăх регионсен шутĕнче палăртрĕ. Ку вăл бюджет укçи-тенкипе тухăçлă усă курассине тивĕçтерес енĕпе тăвакан пирĕн пĕрлехи ĕç-хĕле панă пысăк хак.

Çапах та пирĕн бюджет политикине лайăхлатмалли тата хамăрăн тупăшсене ӳстермелли резервсем те çителĕклĕ. Бюджетăн тупăш пайне тултармалли çăл куçсенчен пĕри вăл патшалăх тата муниципалитет пурлăхĕпе тухăçлă усă курни пулса тăрать. Хальхи вăхăтра пурлăха тата çĕр лаптăкĕсене рынокри хаксемпе палăртса аукционсем урлă кăна уйăрса памалли ĕçсене йĕркелесе тăракан норматив-право акчĕсене йышăннă. Ку пирĕн принцип тĕлĕшĕнчи позици. Унсăр пуçне, çурт лартакансене çĕрсене алла илме хавхалантарас тĕллевпе, çĕр лаптăкĕсемпе усă курнăшăн илекен аренда тӳлевĕн виçине строительство ĕçне тăвакан вăхăта шута илсе улăштарассине пăхса хăварнă. Çак мерăсем Чăваш Республикин пĕрлештернĕ бюджетне хушма майпа 260 миллион тенкĕ пырса кĕрессине тивĕçтерме май пачĕç.

Çапах та вăйра тăракан саккунсем çĕрпе усă курмалли ĕç-хĕлле туллин йĕркелесе тăраймаççĕ. Харпăрлăхра шутланакан çĕр лаптăкĕсем час-часах темиçешер çул хушши ĕçе кĕмесĕр выртаççĕ тата ку проблема Раççей Федерацийĕн чылай субъектĕнче палăрать. Усă курман çĕр лаптăкĕсене çаврăнăша кĕртни бюджетсен тупăш пайне тултарма тата ресурссене социаллă нушасем валли яма пулăшать.

2012 çулта эпир бюджет сферин учрежденийĕсене централизацилес тата вĕсен ĕç-хĕлне вырăнлăрах тăвас енĕпе ĕçлеме тытăнтăмăр. Асăннă ĕçе пурнăçланине пула кăçал кăна перекетленĕ бюджет укçи-тенки 70 миллиона яхăн çитмелле.

Экономикăра йĕркеленнĕ лару-тăру укçа-тенке шута илсе пурăнма хистет. 2014 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа шкулченчи вĕренĕве укçа-тенкĕпе тивĕçтермелли полномочисем республика шайне куçаççĕ, çавна май унта та тăкаксен тухăçлăхне ӳстерес енĕпе тивĕçлĕ ĕçсене туса ирттермелле.

2013 çулта шалти рынокра тавар сутăнасси чакнăран, конкуренци вăйлă пулнăран, кредитсене вăрах вăхăта парасси йăлана кĕменрен Чăваш Ен промышленноç комплексĕн чылай отраслĕнче производство шайĕ чакрĕ. Çав вăхăтрах республикăри предприятисем пĕр вырăнта тăмаççĕ, малалла аталанаççĕ. Иртсе пыракан çулăн пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх – вĕсем тиесе ăсатнă инновăци продукци тӳпи 23 процента çитмелле. Ку вăл 2008 çулхи кăтартуран 3 хута яхăн пысăкрах пулсан та, çителĕксĕртерех-ха.

«Химпром» АУО пысăк икĕ проекта пурнăçлама тытăнчĕ. Вĕсенчен пĕрремĕшĕ вăл – водород перекиçне çулталăкне 50 пин тонна хăватпа кăларакан çĕнĕ производство йĕркелесси. 2018 çулта проектпа пăхнă хăватпа ĕçлеме пуçласан «Химпром» продукцийĕ Раççей Федерацийĕнчи тата Никама Пăхăнман Патшалăхсен Пĕрлĕхĕнчи водород перекиçĕн рынокĕн çуррине ытла йышăнма пултарать. Ку проект 2013 çулхи авăн уйăхĕнче Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ тата «Группа Оргсинтез» АХО хушшинче тунă Килĕшӳ шайĕнче пурнăçланать.

Иккĕмĕш проект тĕнчери рынокра лайăх сутăнакан гербицида çулталăкне 20 пин ытла тонна калăпăшпа туса кăларассипе çыхăннă. Завод тума тата çĕнĕ производство йĕркелеме хывакан инвестицисен пĕтĕмĕшле сумми 7 миллиард тенкĕ ытла, кунта пысăк тухăçлă 300 ытла ĕç вырăнĕ йĕркеленмелле.

● 2 стр. ➡

Спорт енĕпе – чи лайăх регион

Раштав уйăхĕн 16-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Мускавра физкультурăпа спорт енĕпе паракан наци премине тивĕçнисене чыслама йĕркеленĕ /вăл РФ Спорт министерстви пулăшнипе иртнĕ/ уява хутшăннă. Çав мероприятире ЧР спорт министрĕ Сергей Мельников та пулнă.

"Раççей регионĕ" номинацире Чăваш Республикине çĕнтерӳçĕ тесе пĕрремĕш хут палăртнă. Чăваш Ен çĕршывăн чи лайăх спорт регионĕ пулса тăни – влаç органĕсем физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе ăнăçлă ĕçленин тата республикăра пурăнакансем сывă пурнăç йĕркине суйласа илнин кăтартăвĕ.

Чыслав саманчĕ ИТАР-ТАСС пресс-центрĕнче иртнĕ, ăна "Раççей-2" телеканалпа "Пысăк спорт" программăра кăтартнă.

Спорт номинацийĕсене Раççей Правительстви 2010 çулта çирĕплетнĕ. Кăçал çĕнтерӳçĕсене 10 номинацире палăртнă: "Раççей мăнаçлăхĕ", "Раççей шанчăкĕ", "Спорта парăннăшăн", "Спортри тапхăр", "Спортри пĕр шухăшлăх", "Раççей регионĕ", "Парăнманлăх", "Спорт парнасĕ", "Спорт объекчĕ", "Яллă вырăнта физкультурăпа спорт аталанăвне тӳпе хывнăшăн". Вĕсене пурне те 500 пин тенкĕ преми параççĕ.

И.БЕЛОВА.

Пирĕн Татьяна – виççĕмĕш

Çак кунсенче Италири Трентинăра хĕллехи XXVI Универсиада иртет. Унта Шупашкар пики Татьяна Семенова, маларах биатлон спринтĕнче бронза медале тивĕçнĕскер, 10 çухрăмлă дистанцие виççĕмĕш вĕçленĕ.

● *Татьяна Семенова /сылтăмран виççĕмĕшĕ/.*

Республикăри ачасемпе çамрăксен Олимп резервĕсен 2-мĕш спорт шкулĕнче Анатолий Акимов тренер патĕнче ăсталăха туптаканскер пăшалтан Раççей спортсменкисенчен ăнăçлăрах пенĕ.

Асăннă ăмăртура Польша спортсменки Вероника Новаковска-Жемняк мала тухнă. Çак çĕр-шыв пикиех – Моника Хойниш – финиша иккĕмĕш çитнĕ. Аса илтеретпĕр: Универсиада раштавăн 11-мĕшĕнче пуçланнă. Вăл вунă кун пырать. Спортсменсем спортăн вун икĕ тĕсĕнче вăй виçĕç. Пилĕк кун пĕтĕмлетĕвĕпе Раççейĕн пĕрлештернĕ команди хальлĕхе малти вырăнта.

«Эпĕ кунта пĕр медаль те пулин çĕнсе илес, Раççейре студентсен спорчĕ вăйлă пулнине кăтартас тĕллевпе килнĕ. Хамăн мĕн пур хăватăма, ăсталăхăма кăтартас килчĕ. Тен, мана та асăрхĕç, çĕр-шывăн пĕрлештернĕ командине илĕç. Нацин тĕп командине лекме питĕ йывăр, «Б» командăра та пулин пуласчĕ», – çапла каланă Татьяна Семенова ИТАР-ТАСС журналисчĕсене панă интервьюра. Çавăн пекех Татьяна хальхи кăтарту уншăн кĕтменлĕх пулнине те палăртнă. «Пирĕн хĕрарăмсен команди кунта çĕнсе илнĕ пĕрремĕш награда юлашки пулмассине шанатăп», – тенĕ спортсменка.

Р.ВЛАСИКОВА.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕн Хушăвĕ

Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн черетлĕ вун саккăрмĕш сессийĕ уçăласси çинчен

Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн черетлĕ вун саккăрмĕш сессине Шупашкар хулинче Правительство çурчĕн Ларусен пысăк залĕнче 2013 çулхи раштавăн 24-мĕшĕнче пухас.

10 сехетре пуçланать.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ Ю.ПОПОВ.

Шупашкар,
2013, раштав, 13, 1348 №.

* * *

Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн черетлĕ вун саккăрмĕш сессийĕн кун йĕркин проекчĕ

Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн черетлĕ вун саккăрмĕш сессийĕнче 15 ытла ыйтăва пăхса тухма палăртнă, çав шутра:

1. Раççей Федерацийĕн РФ Конституцине тӳрлетӳ кĕртесси çинчен калакан «Раççей Федерацийĕн Аслă сучĕ тата Раççей Федерацийĕн прокуратури çинчен» саккунĕ çинчен.

2. Чăваш Республикин «Чăваш Республикин «Чăваш Республикин 2013 çулхи, планпа пăхнă 2014 тата 2015 çулсенчи республика бюджечĕ çинчен» саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен» саккунĕн проекчĕ çинчен.

3. Чăваш Республикин «Чăваш Республикин «Чăваш Республикин 2020 çулченчи социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн стратегийĕ çинчен» саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен» саккунĕн проекчĕ çинчен.

4. Чăваш Республикин «Чăваш Республикин е муниципалитетсен патшалăх харпăрлăхĕнчи çĕрсен шутне кĕрекен çĕр лаптăкĕсене Чăваш Республикин е муниципалитетсен патшалăх нушисем валли илмелли, çав шутра сутăн илмелли тĕслĕхсене çирĕплетесси çинчен» саккунĕн проекчĕ çинчен.

5. Чăваш Республикин «Чăваш Республикин «Муниципалитетсен пурăнмалли çурт-йĕр тĕрĕслевĕ тата Чăваш Республикин пурăнмалли çурт-йĕр надзорĕн органĕ муниципалитетсен пурăнмалли çурт-йĕр тĕрĕслевĕн органĕсемпе хутшăнса ĕçлесси çинчен» саккунĕн 3 статйине улшăнусем кĕртесси çинчен» саккунĕн проекчĕ çинчен.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил

/Малалли. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Республикăри организацисем мала иртме май паракан, инноваци мелĕпе туса хатĕрленĕ ĕçсене пурнăçласçĕ.

"Ăслă энергетика" Smart Grid концепцине пурнăçлас тĕллевпе "Электроприбор" акционерсен уçă обществинче, "Шупашкарти электроаппарат завочĕ" акционерсен хупă обществинче, "Бреслер" тата "ЭКРА" наукăпа производство предприятийĕсенче пысăк технологиллĕ производствăсем йĕркеленĕ.

"Диском", "Стомполимер", "Солюшн" компанисем, Шупашкарти В.И.Чапаев ячĕллĕ производство пĕрлешĕвĕ тĕрлĕ сферăра пысăк технологиллĕ проектсене пурнăçласçĕ. Пирĕн тавар туса кăларакансен çĕнĕ продукцийĕ пекки çĕршыври рынокра урăх çук, вăл Раççей чиккисен тулашĕнче те кирлĕ пулса пырать.

Шупашкар тивĕслипех çĕр-шыври реле тăвакан центр шутланать. Чăваш Ен тĕп хулинче умлăн-хыçлăн иккĕмĕш çул ĕнтĕ Пĕтĕм тĕнчери "Реле хÿтĕлевĕ тата Раççей электроэнергетика системисене автоматизацилесси" наукăпа практика конференцийĕ тата выставка иртет. Пирĕн реле ăстисем туса хатĕрленĕ ĕçсемпе паллашма специалистсем Япони, Австри, Беларуç, Германи, Канада, Норвеги, Украина, Швеци, Франци çĕр-шывĕсенчен килеççĕ.

Йăлана кĕнĕ пекех – экономика ÿсĕмĕн локомотивĕ республикăн строительство отраслĕ. Çĕнĕ объектсем çĕклесси, халь ĕçлекен производствăсене çĕнетесси, регионти пур пек чĕр тавар никĕсне тĕпе хурса энерги тĕлĕшĕнчен тухăçлă тата энерги перекетлекен строительство материалĕсем, изделисемпе конструкцисем туса кăлармалли çĕнĕ технологисене ĕçе кĕртесси лайăх шайра пулса пырать.

Кăçалхи çĕртме уйăхĕнче Красноармейски салинче пиччĕн керамика кирпĕчĕ тата хушма майпа пысăк технологиллĕ керамика туса кăларакан хальхи йышши "КЕТРА" завод хута кайрĕ. Çулталăкне 60 миллион кирпĕч кăларакан завода "ТУС" акционерсен хупă обществи икĕ çултан та сахалрах вăхăтра туса лартрĕ. Унăн продукцийĕ республикăн строительство комплексне хальхи йышши строительство материалĕсемпе тивĕстерме, тăвакан çурт-йĕрĕн техника характеристикине лайăхлатма, çуртсемпе сооруженисене архитектура тĕлĕшĕнчен илем кÿме пулăшма пултарать.

СУОР компанин çурт-йĕр тăвакан комбиначĕ тулли хăватпа ĕçлеме пуçларĕ. Пысăк панельлĕ çурт-йĕр строительствин финсен çĕнĕ технологийĕсемпе усă курса çĕнетнĕ производстви çулталăкне 300 пин тăваткал метр пурăнмалли çурт-йĕре ĕçе кĕртме май парать. "Монолитстрой" тата "Инкост" компанисем, Шупашкарти тата Çĕнĕ Шупашкарти строительство материалĕсен завочĕсем, 9-мĕш тимĕр-бетон комбиначĕ тата "Чебоксарский" ялти строительство комбиначĕ çĕнĕ изделисем туса кăларассине алла илнĕ.

Халĕ малта пыракан çав предприятисем çĕнсе илнĕ позицисене çирĕплетсе хăвармалла тата вĕсен опытне республика экономикин никĕсри отраслĕсенче сармалла. Пирĕн умра модернизаци, техника тĕлĕшĕнчен пуянланас ĕçсене инвестицисем явăçтарнин никĕсĕ çинче ĕç тухăçлăхне ÿстерессипе сыхăннă тĕллевсем тăраççĕ. Хальхи условисенче экономика ÿсĕмне технологин çĕнĕ тытăмне куçса кăна тивĕçтерме пулать.

XXI ĕмĕр условийĕсенче конкурентлă пулас тесен паянхи тата ыранхи кунпа кăна пурăнни çителĕксĕр. Пирĕн халь пурнăçлакан республикăн Социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн стратегийĕн чиккисенчен иртсе тата та маларах пăхмалла, стратегин тĕп ориентирĕсемпе приоритечĕсене, республикăн 2030 çулчченхи аталанăвĕн траекторине палăртмалла.

Министрсен Кабинетне 2014 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне бюджетăн вăрах вăхăтлăх стратегине туса хатĕрлеме хушса хăваратăп.

Ку кăткăс та пĕлтерĕшлĕ, яваплă тĕллев. Анчах та эпир хамăр ума амбициллĕ тĕллевсем лартса вĕсене пурнăçлама хăнăхнă. Хамăр вăя шанмалла, тăрăшса ĕçлемелле тата суйласа илнĕ çулран ниçталла та пăрăнмалла мар. Ун чухне пирĕн пурте ăнать!

Ял хуçалăхне аталантарасси пирĕн экономика политикин тĕп çул-йĕрĕсенчен пĕри шутланать. 2013 çул Чăваш Ен хресченĕсемшĕн йывăр çул пулчĕ. Çуллахи типĕ çанталăка пула пĕтĕмĕшле 36,5 пин гектарпа танлашакан лаптăк çинчи калча хăрса типрĕ, вырма вăхăтĕнче пуçланнă çумăрсем вара палăртса хунă тухăça туллин пухса кĕртме май памарĕç.

Раççей Тĕнчери суту-илÿ организацине кĕнĕ условисенче иртекен пĕрремĕш çул харпăрлăхăн мĕн пур формипе ĕçлекен пĕтĕм ял хуçалăх таварĕсем туса илекенĕн, туса кăларакан продукцие рынокра сутас тесен, хăйсен вăйне тата укçитенкине пĕрлештерме кирлине кăтартса пачĕ. Экологи тĕлĕшĕнчен таса тата пысăк пахалăхлă продукци яланах кирлĕ, ăна туса илесси те рентабельлĕ шутланать.

Çакна палăртас тетĕп: 2013 çулта ял хуçалăхне патшалăх панă пулăшăвăн калăпăшĕ 2,5 миллиард тенкĕпе е, 2012 çулхипе илсен, 117,5 процентпа танлашнă. Чăваш Ен патшалăх пулăшăвне çĕр ĕçченĕсем патне тÿрремĕн çитерес енĕпе Раççейри чи лайăх регионсен йышне кĕнĕ. Пирĕн республика Раççей Федерацийĕнче темиçе çул ĕнтĕ пĕчĕк калăпăшлă хуçалăхсем явăçтаракан кредит ресурсĕсен кăтартăвĕ енĕпе лидер шутланать. Çамăллăхлă кредитсемпе килти хушма хуçалăх тытакан кашни виççĕмĕш çемье /37%/, çав шутра çемьесен 20% иккĕмĕш хут усă курнă. Вĕсене пурне те ĕçченлĕхшĕн тав тăватăп.

Чăваш Республики ĕçе пуçăнакан фермерсене тата çемье выльăх-чĕрлĕх фермисене пулăшу парас енĕпе йышăннă программăсене пурнăçлама хастаррăн хутшăнни пĕчĕк калăпăшлă хуçалăхсене аталантарма хавхалантармалли хушма сăлтав пулса тăчĕ. Икĕ çулта /2012-2013 çулсенче/ çав программăсен шайĕнче ĕçе пуçăнакан 97 фермер тата 10 çемье выльăх-чĕрлĕх ферми пĕтĕмĕшле сумми 164 миллион тенкĕпе танлашакан патшалăх пулăшăвне илнĕ.

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен малашне те **килти хушма хуçалăхсенчен хресчен /фермер/ хуçалăхĕсем йĕркелес ĕçре** пур енĕпе те пулăшса пымалла.

Çакна уйрăммăн палăртатăп: хальхи вăхăтри пысăк тухăçлă техникăпа усă курни ял хуçалăх организацийĕсене çанталăкăн йывăр условийĕсенче те вырма вăхăтне самаях кĕскетме тата пухса кĕртекен тухăç çухатăвне чакарма май пачĕç. Çитес çултан пуçласа туянакан ял хуçалăх техникин хакĕн 15 процентне патшалăх субсидилеме пуçлассине палăртаççĕ, çавна пула пирĕн ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсен техника тата технологи тĕлĕшĕнчен пуянланма май пулать.

Çĕнĕ культурăсем акса ÿстерекен, тĕрлĕ вăхăтра пиçсе çитекен сортсемпе усă куракан тăрăшуллă хуçасем лайăх тухăç пухса кĕртеççĕ. Çĕр-шыври селекционерсем тунă çитĕнÿсене пула республикăра куккуруса тĕшĕлĕх ÿстермелли малта пыракан опытпа ăнăçлă усă курнă. Кăçалхи вăтам тухăç гектартан 50,3 центнерпа танлашнă, çакă чи лайăх çул пуçтарса кĕртекен тĕш тырă культурисен вăтам тухăçĕнчен икĕ хут пысăкрах. Енчен те иртнĕ çул тĕш тырă технологийĕпе куккуруса республикăра пĕр хуçалăхра кăна туса илнĕ пулсан, 2013 çулта çавнашкал хуçалăхсен шучĕ пиллĕке çити ÿснĕ. Малашлăхлă çак культурăна акса ÿстерекен лаптăксене тата та пысăклатмалла.

Ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсем кăçал хăйсем явăçтаракан çăмăллăхлă кредитсем енĕпе процент ставкисене субсидилеме уйăракан укçа-тенкĕ çитменнине туйса илчĕç. Ку ыйту Чăваш Енре кăна мар, çĕр-шывĕпех çивĕч тăрать. Раççей Федерацийĕн Ял хуçалăх министерстви унăн çивĕчлĕхне çитес çул пĕтерме шухăшлать. Палăртса хăваратăп: явăçтаракан кредитсем енĕпе процент ставкисене субсидилессине ытти çулсем валли те сыхласа хăварнă. Çавăнпа та патшалăх пулăшăвĕпе тивĕçтерекен çĕнĕ инвестици проекчĕсене пурнăçлассичнен тем тесен те пăрăнса юлмалла мар. Хальхи вăхăтра ял хуçалăх продукцийĕн хакĕ тавар туса илекенсемшĕн ăнăçлă пулнипе палăрса тăрать, çакă отрасле инвестици тĕлĕшĕнчен илĕртÿллĕ тăвать, производствăна малалла анлăлатма тата аталантарма хавхалантарать.

Агропромышленноç комплексĕнче кăçал темиçе пысăк проекта пурнăçланă. Чăн малтанах, "АККОНД" кондитер фабрикинче производство çĕнетĕвне малалла тăснине, "Етĕрнесĕт" çĕнĕ завод уçăлнине, Вăрнарти типĕ сĕт туса кăларакан заводра производствăна çĕнетнине тата реконструкциленине, Шупашкарти сăра тăвакан "Букет Чувашии" фирмăра производствăна çĕнетнине, Германири "Девелей" компанин "Пахча çимĕç тирпейлекен тата тĕрлĕ соуспа тутă кĕртмелли хутăшсем туса кăларакан завод" инвестици программине пурнăçланине палăртса хăваратăп. Çак кунсенче кăна "Юрма" агрохолдинг кайăк-кĕшĕк ашне тарăннăн тирпейлекен завода хута ячĕ.

Тунă ĕç кăтартăвĕсем çакна çирĕплетеççĕ: шута илессине кирлĕ пек йĕркеленĕ, ĕç тухăçлăхĕ пысăк шутланакан агропромышленноç комплексĕн организацийĕсенче ĕçшĕн те тивĕçлипе тÿлеççĕ. Çапах та, пĕтĕмĕшле илсен, пирĕн ял хуçалăхĕнче тÿлекен ĕç укçи Атăлçи федераци округĕнчи регионсен хушшинче пĕчĕккисенчен пĕри шутланать. Çакă ырă мар япала, анчах та ку факт. Паян вăй питти çынна вунă пин те улт çĕр тенкĕпе танлашакан ĕç укçи тивĕçтерме пултараймасть. Çирĕп йĕркепе тÿлекен, пысăк шалуллă ĕç вырăнĕ пулманни ĕçлеме пултаракан халăх ял çĕрĕнчен урăх вырăна куçнин тĕп сăлтавĕ пулса тăрать. Чăн малтанах çакă Мускава, Санкт-Петербурга, Хусана ĕçлеме çÿрекен арçынсене пырса тивет.

Халăхра: "Ар епле – йышĕ çапла",-теççĕ. Çемьесем кĕске вăхăтлăха кăна пулсан та кил хуçисĕр тăрса юлни мăшăрсен хушшинчи хутшăнусене тата – чи пĕлтерĕшли – ачасене воспитани парас ĕçе япăх витĕм кÿрет. Çак ларутăрăва йĕркене кĕртмелле. Чăн та, пирĕн регион ĕç вăйĕ ытлашши пулнипе палăрса тăрать тата, Атăлçи федераци округĕнчи вăтам шайпа танлаштарсан, халăх йышĕ те унта 3,5 хут пысăкрах. Çапах та илсе кăтартнă çак тĕслĕх çине таянни кунта тÿрре тухмалли сăлтав пулма пултараймасть.

Министрсен Кабинечĕн, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен, предприяти ертÿçисемпе бизнес-пĕрлĕхĕн ял ĕçченĕсене ĕçпе тивĕçтерес тата вĕсен ĕç укçин шайне ÿстерес енĕпе пĕрле пурнăçламалли мерăсен комплексне туса хатĕрлемелле. Чăн малтанах халăхра "арçын профессийĕ" теме хăнăхнă ĕç вырăнĕсем йĕркелеме тăрăшмалла. Арçыннăн çемьере пурăнмалла!

Çĕр хăйне тăрăшса тата пĕлсе пăхнине кăмăллать. Çав хушăрах çакна та асăнса хăвармасăр пултараймастăп: туса ирттернĕ ĕçсене пăхмасăр, реформăсем пурнăçланакан 20 çул хушшинче те эпир ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсене кирлĕ пек шута илес тата вĕсемпе усă курнине тĕрĕслесе тăрас енĕпе йĕрке туса çитереймерĕмĕр. Хуçасăр çĕрсем тĕлĕшпе халĕ те право çирĕплетекен документсем йĕркелемен, çакă вара вĕсемпе тĕрĕс мар усă курасси патне илсе пырать. Çавăнпа та вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен умне çитес виçĕ çулта çÿлерех асăннă çĕр лаптăкĕсем тĕлĕшпе муниципалитет пĕрлĕхĕсен харпăрлăх правине регистрацилессине вĕçлеме тĕллев лартатăп. Министрсен Кабинечĕн çак ĕçре кирлĕ пек пулăшу кÿмелле, общество организацийĕсенчен вара ăна пурнăçланине тĕрĕслесе тăма ыйтатăп. Çĕрĕн яланах хуçи пулмалла!

Хисеплĕ депутатсем!

Республикăн ăнăçлă аталанăвне экономика ÿсĕмĕн тата ирттерсе пурнăçланă кăтартусен куçа савăнтаракан цифрисем мар, халăхăн социаллă пурнăçĕн ытлăçитлĕхĕ, вăл патшалăх тата муниципалитет паракан пулăшу ĕçĕсемпе кăмăллă пулни, общество-политика çирĕплĕхĕ палăртаççĕ. Чăваш Енре пурăнакансем пирĕн ĕçе шăпах вĕсемпе хакласçĕ. Республика тăрăх çÿренисем çакна ĕнентереççĕ – çынсене илĕртÿллĕ статистика та, "Чăваш Ене пирĕн мĕнлерех йĕркелемелле" темăпа пĕтĕмĕшле политикăлла юмахлани те кирлĕ мар. Вĕсем влаç органĕсенчен пурнăç пахалăхне лайăхлатма пулăшакан пайăр ĕçсем кĕтеççĕ. Ку ăнлав шутне вара тĕрĕс те сывă апатлану та, медицина тата вĕренÿ енĕпе паракан пулăшу ĕçĕсен пысăк шайĕ те, пурăнмалли çурт-йĕр пурри те, çемьери тăнăçлăх тата пурнăçри ытти ансат ыйту та кĕреççĕ.

Чăваш Енре пурăнакансен пурнăçне лайăхлатмалли тĕп çул-йĕрсенчен пĕри вăл – Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Владимир Владимирович Путинăн 2012 çулхи çу уйăхĕн 7-мĕшĕнче кăларнă указĕсене пурнăçлани. Республикăра асăннă указсене пурнăçлас енĕпе, çав шутра бюджет сферин ĕçченĕсен ĕç укçине ÿстерес пайра та тĕплĕ плансем /"çул карттисем"/ йышăннă тата пурнăçланаççĕ.

Эпĕ вĕрентекенсемпе, медицина ĕçченĕсемпе, ача сачĕн воспитателĕсемпе час-часах тĕл пулатăп, вĕсем пурте ĕç укçи палăрмаллах ÿснине пĕр çын пек пулса пĕлтереççĕ. Çавна май республикăра пурăнакансем халĕ социаллă сфера учрежденийĕсенче паракан пулăшу ĕçĕсĕн пахалăхне ÿстермешкĕн ыйтма пултараççĕ.

Пĕтĕмĕшле илсен – республикăри вăтам ĕç укçи хаклав тăрăх 2013 çулта 20 000 яхăн тенке çитет, çакă 2010 çулхинчен 1,5 хут пысăкрах.

Раççей статистика службби пĕлтернĕ тăрăх – Чăваш Енри ĕç тухăçлăхĕн ÿсĕм хăвăртлăхĕ юлашки виçĕ çулта 13,5% чухлĕ ÿснĕ, Раççейĕпе - 9,3%. Çапах та ĕç тухăçлăхĕ енĕпе пирĕн кăтартусем Раççейри вăтам пĕлтерĕшсенчен палăрмаллах кая юлаççĕ.

Тĕнчери суту-илÿ организацийĕнче шутланакан условисенче тĕнчери тата Пĕтĕм Раççейри рыноксенче конкурентлă пулас тесен ĕç тухăçлăхĕн кăтартăвне малта пыракан çĕр-шывсенчи шая çити ÿстерессине тивĕçтермелле. Тата çакна та манмалла мар: ĕç укçин шайĕ чăн малтанах шăпах ĕç тухăçлăхĕнчен килет.

Чăваш Ен халăха ĕçпе тивĕçтерес енĕпе лайăх кăтартусем тума пултарчĕ, çитменнине тата экономикăри стабильлĕх те ĕç вăйĕн кирлĕлĕхне ÿстерме пулăшать. Раççей Федерацийĕн Ĕç тата социаллă хÿтлĕх министерстви палăртнă тăрăх – ĕç шыракан граждансене ĕçе вырнаçтарнин шайĕпе Чăваш Ен Раççей субъекчĕсем хушшинче 2-мĕш вырăнта. Инвалидсене ĕçе вырнаçтарнин шайĕпе Чăваш Республики Раççей субъекчĕсен хушшинче вара – 5-мĕш вырăнта. Çав хушăрах çакна палăртса хăваратăп: ĕçсĕр граждансене професси енĕпе пĕлÿ парасси тата хушма професси пĕлĕвĕ парасси патшалăх халăха ĕçпе тивĕçтерес енĕпе паракан пулăшу ĕçĕсенчен приоритетлисенчен пĕри шутланать. Ĕçсĕр граждансен пĕтĕм йышĕнчи професси пĕлĕвĕ илме тытăннă граждансен тÿпи енĕпе 2013 çулăн I çурринче Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен хушшинче эпир 2-мĕш вырăнта пулнă.

2013 çулхи раштав уйăхĕн пуçламăшĕ тĕлне ĕçченсем кирлĕ пулни çинчен республикăри халăха ĕçпе тивĕçтерекен служба органĕсене пĕлтернĕ хисеп 16 200 çынна яхăн. Ĕç ыракан пĕр çын пуçне 4 яхăн ваканси тивĕçет, çакă ĕçсĕррисене васкавлăн ĕçе вырнаçтарма май парать.

Хĕрарăмсене ачисене воспитани панипе пĕрлех ĕçлеме те майсем туса памалли мерăсен комплексĕ /"çул картти"/ пурнăçланать. Инвалидсем валли ĕç вырăнĕсене сыхласа хăварас, çавăн пекех вĕсене ĕçе вырнаçтарма пулăшас тĕллев валли çулленех бюджетран кирлĕ чухлĕ укçа-тенкĕ уйăраççĕ.

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ÿкерчĕкĕсем

Хисеплĕ депутатсем!

Кăçал республикăра 860 пин тăваткал метр ытла пурăнмалли çурт-йĕр лаптăкне хута яма палăртнă. 1000 çын пуçне хута яракан пурăнмалли çурт-йĕр кăтартăвĕ енĕпе Чăваш Ен Атăлçи федераци округĕнчи субъектсен йышĕнче виçĕ çул ĕнтĕ пĕрремĕш вырăн йышăнать. Хута яракан пурăнмалли çурт-йĕрĕн пĕтĕмĕшле калăпăшĕнче харпăр хăй вăйĕпе тăвакан çурт-йĕр строительствин тÿпи чакни, çав вăхăтрах нумай хваттерлĕ çуртсенче хута яракан пурăнмалли çурт-йĕр лаптăкĕ ÿсни палăрать. Пурăнмалли çурт-йĕр тăвас ĕç хăвăртлăхне ÿстерсе пыни, çурт-йĕр рынокĕнче конкуренци вăйланни пурăнмалли çурт-йĕрĕн пĕр тăваткал метрĕн хакĕ чакассине витĕм кÿме пулăшĕç.

Чăваш Республикинче эконом-класс йышши пурăнмалли хăтлă çурт-йĕр тăвассине аталантарни урлă граждансен мĕн пур категорине туянма юрăхлă пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерессине патшалăхăн çурт-йĕр политикин стратеги тĕллевĕ тесе пĕлтернĕ.

2012 çул пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх – эконом-класс йышши пурăнмалли çурт-йĕрĕн хута янă чăн калăпăшĕ 310 пин тăваткал метрпа е пĕтĕмĕшле ĕçе кĕртнĕ пурăнмалли çурт-йĕр калăпăшĕн 38 проценчĕпе танлашнă, 2013 çулта çавнашкал çурт-йĕре 346 пин тăваткал метр чухлĕ е хута яракан пурăнмалли çурт-йĕрĕн пĕтĕмĕшле калăпăшĕн 40 проценчĕ чухлĕ тума палăртнă.

2013 çулта пурăнмалли çурт-йĕр строительстви валли уйăрса пама 452 гектара яхăн çĕр лаптăкĕсене халăх пурăнакан вырăнсен çĕрĕсен шутне кĕртнĕ, унта 215 пин тăваткал метр чухлĕ пурăнмалли çурт-йĕр тума пăхса хăварнă. 1500 çĕр лаптăкне нумай ачаллă çемьесене уйăрса пама йышăннă.

Халăх пурăнакан вырăнсене комплекслă майпа çурт-йĕр лартас ыйтăва тишкернĕ чухне муниципалитет пĕрлĕхĕсене маларах усă курма кăна мар, паракан пулăшу ĕçĕсен пахалăхне лайăхлатассине те тивĕçтерме май парать.

Инвалидсене ĕçе вырнаçтарнин шайĕпе Чăваш Республики Раççей субъекчĕсен хушшинче 2-мĕш вырăнта. Çав хушăрах çакна палăртса хăваратăп: ĕçсĕр граждансене професси енĕпе пĕлÿ парасси тата хушма професси пĕлĕвĕ парасси патшалăх халăха ĕçпе тивĕçтерес енĕпе паракан пулăшу ĕçĕсенчен приоритетлисенчен пĕри шутланать. Ĕçсĕр граждансен пĕтĕм йышĕнчи професси пĕлĕвĕ илме тытăннă граждансен тÿпи енĕпе 2013 çулăн I çурринче Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен хушшинче эпир 2-мĕш вырăнта пулнă.

2013 çулхи раштав уйăхĕн пуçламăшĕ тĕлне ĕçченсем кирлĕ пулни çинчен республикăри халăха ĕçпе тивĕçтерекен служба органĕсене пĕлтернĕ хисеп 16 200 çынна яхăн. Ĕç ыракан пĕр çын пуçне 4 яхăн ваканси тивĕçет, çакă ĕçсĕррисене васкавлăн ĕçе вырнаçтарма май парать.

Хĕрарăмсене ачисене воспитани панипе пĕрлех ĕçлеме те майсем туса памалли мерăсен комплексĕ /"çул картти"/ пурнăçланать. Инвалидсем валли ĕç вырăнĕсене сыхласа хăварас, çавăн пекех вĕсене ĕçе вырнаçтарма пулăшас тĕллев валли çулленех бюджетран кирлĕ чухлĕ укçа-тенкĕ уйăраççĕ.

Граждансем коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тÿлекен виçене чакарма энерги ресурсĕсене перекетлес енĕпе тивĕçлĕ çамрăк çемьесем тата çамрăк специалистсем шутланаççĕ. Патшалăхăн пурăнмалли çурт-йĕр фончĕн хваттерĕсене çавăн пекех майсăр лару-тăруран инкек тÿснĕ граждансене уйăрса панă. **Эпир хамăр мĕн шантарнине йăлтах пурнăçларăмăр! Çынсене нихăçан та инкекре пăрахса хăварман, хăвармастпăр та!**

Республикăра пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха çĕнетмелли программа малалла пурнăçланать. Кăçал нумай хваттерлĕ 126 çурта тĕпрен юсас ĕç вĕçленет, вĕсенче 19,3 пин çын пурăнать. Çак тĕллевсем валли янă укçатенкĕн пĕтĕмĕшле калăпăшĕ 266,6 миллион тенкĕпе танлашнă. Çĕнĕ çултан пуçласа Нумай хваттерлĕ çуртсене тĕпрен юсас енĕпе ĕçлекен республика фончĕ ĕçлеме тытăнать.

2018 çул тĕлне ишĕлекен çурт-йĕр фондне пĕтерме палăртнă. Пĕтĕмпе 4 çул хушшинче пĕтĕмĕшле лаптăкĕ 123 пин тăваткал метрпа танлашакан ишĕлекен çурт-йĕр фондĕнчен 10 пин çынна урăх вырăна куçарма палăртнă. Çакăн валли мĕн пур шайри çăл куçран уйăракан укçа-тенкĕ калăпăшĕ – 3,6 миллиарда яхăн тенкĕпе танлашать.

Граждансем коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тÿлекен виçене чакарма энерги ресурсĕсене перекетлес енĕпе тивĕçлĕ ĕçсем пурнăçланаççĕ, нумай хваттерлĕ çуртсене 100 проценчĕпех энерги ресурсĕсене шута илекен хатĕрсемпе тивĕçтернĕ. Тумалли тепĕр утăм – шута илмелли хатĕрсене кашни хваттерех вырнаçтарасси.

Ăшă, шыв парса тăрас тата шыв юхтарса кăларас, газпа тата электриствăпа тивĕçтерсе тăрас енĕпе паракан пулăшу ĕçĕсен хакĕсем 2013 çулăн I çурринче улшăнмарĕç, 2012 çулхи раштав уйăхĕнчи шайрах юлчĕç. Раççей Федерацийĕн Правительствин хушăвĕпе килĕшÿллĕн граждансем коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн пĕтĕмĕшле тÿлекен укçатенкĕ шайне çулталăкри вăтам тÿлев виçинчен 6 процентран ытла ÿссе кайма паман. Çав хушăрах пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тÿлеме кăçалхи 10 уйăхра 20 пине яхăн çемьене бюджетран пĕтĕмĕшле сумми 203 миллион тенкĕпе танлашакан е пĕр çемье пуçне 1030 тенкĕ чухлĕ субсиди уйăрса панă, çакă, 2012 çулхипе танлаштарсан, 15 процент ытларах. Палăртса хăваратăп: эпир социаллă тÿлевсем енĕпе хамăр çине илнĕ мĕн пур тивĕçе пурнăçлатпăр, малашне те пурнăçлăпăр.

2011 çултан пуçласа республика хулисенче нумай хваттерлĕ çуртсен картишĕсене тата вĕсем патне пымалли çулсене тĕпрен юсамалли тата юсамалли программа пурнăçланать. Кăçал республикăн пĕрлештернĕ бюджечĕн укçи-тенки шучĕпе 272 картиш территорине тата вĕсем патне пымалли 143 çула 135,7 миллион тенкĕлĕх юсанă.

Юлашки çулсенче çав тĕллевсене пурнăçлама пĕтĕмпе 500 миллион тенке яхăн тăкакланă, çакă 764 картиш территорине тата вĕсем патне пымалли 417 çула юсама май панă. Шупашкарта кăна çав тапхăрта хулари картишсен çуррине ытла тирпейлем кĕртнĕ. Юсав ĕçĕпе пĕрлех картишсене ача-пăча çĕнĕ площадкисене, спорт хатĕр-хĕтĕрне вырнаçтарас ĕç пырать. Çапла майпа ачасемшĕн тата аслăрах çынсемшĕн те канмалли, спортпа туслашмалли, сывлăха çирĕплетмелли, вĕсен социаллă кăмăл-туйăмне лайăхлатмалли лайăх майсем йĕркеленеççĕ. Ку программăна хула çыннисем ырласа йышăнчĕç тата ăна Раççей Федерацийĕн Правительствин те тивĕçлĕ хак пачĕ.

Çав вăхăтрах Шупашкар хулин паянхи кунпа çыхăнса тăракан малашлăх аталанăвĕн тĕп планĕ, çĕрпе усă курмалли тата çурт-йĕр лартмалли планĕ çукки пирĕн республика тĕп хулинче çĕнĕ микрорайонсем тата инфратытăм объекчĕсем тăвассине стратегилле планлама чаракан сăлтав пулса тăрать. Çавăнпа та хула влаçĕсен умне асăннă документсене йышăнассине 2014 çул вĕçне вĕçлеме тĕллев лартатăп.

Тулли кăмăлпа çакна палăртатăп: пирĕн республикăра иккĕмĕш çул ĕнтĕ халăх хăй халлĕн ÿсни палăрать. 2013 çулхи кăрлач-юпа уйăхĕсенче ку кăтарту 1 пин çын пуçне +0,7 процентпа танлашрĕ. Çураласлăх тата вилеслĕх кăтартăвĕсен кал-кал лайăх аталанăвне пула халăхăн пурнăç тăршшĕ 70,3 çул таран ÿсрĕ. Çакă аслă çулсенчи çынсене пăхса тăрас енĕпе паракан пулăшу ĕçĕсен сферине анлăлатма хистет. Ватă çынсем общество пурнăçне туллин хутшăнма тивĕç, вĕсене пирĕн пурнăçра пĕччен туйма памалла мар. Аслă ăрăвăн пурнăçри опычĕпе, пĕлĕвĕпе, шанăçлăхĕпе туллин усă курмалла.

Кăçал республикăра Сывлăха сыхлас ĕçе модернизацилемелли программа вĕçленчĕ, ун валли уйăрнă укçа-тенкĕн пĕтĕмĕшле калăпăшĕ 5 миллиарда яхăн тенкĕпе танлашрĕ. Асăннă укçа-тенкĕпе республикăри сывлăх сыхлавĕн кашни иккĕмĕш учрежденине юсанă, 2,5 пин единица ытла медицина оборудованийĕ туяннă. Çак ĕçсем халăха паракан ятарлă, çав шутра пысăк технологиллĕ медицина пулăшăвĕн йышне хушма майпа анлăлатма тата вĕсен калăпăшне пысăклатма май пачĕç.

Çынсем лайăх пахалăхлă медицина пулăшăвĕпе хăйсем пурăнакан вырăн сывăхĕнчех усă курма пултарасси вăя кĕрсе пырать. **"Земство тухтăрĕ"** программа шайĕнче 2012-2013 çулсенче ялти сывлăх сыхлав учрежденийĕсене 181 çамрăк врача ĕçе вырнаçтарнă. Кăçал ял çĕрĕнче хальхи йышши 20 модульлĕ фельдшерпа акушер пунктне туса хута янă, вĕсене чирлĕ çынсене йышăнма тата медицина процедурисене пурнăçлама май паракан хатĕр-хĕтĕрпе тивĕçтернĕ. Çавнашкал тата 40 пункт çитес икĕ çулта ĕçе кĕрĕ.

2013 çулта Шупашкарта патшалăхпа уйрăм çынсен ĕçтешлĕхĕн мелĕпе усă курса Амбулатори майĕпе гемодиализ тăвакан центр уçăлчĕ. Патшалăхпа бизнес пĕрле хутшăнса ĕçленине пула Чăваш Енре пуçласа медицина каяшĕсене ĕçе кĕртмелли проекта пурнăçланă, унăн пилот площадки 2014 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа хута каймалла. Патшалăхпа уйрăм çынсен ĕçтешлĕхĕн мелне анлăн ĕçе кĕртни сывлăха сыхлас ĕç отрасльне хушма инвестицисем явăçтарма тата пур пек ресурссемпе вырăнлăрах усă курма кăна мар, паракан пулăшу ĕçĕсен пахалăхне лайăхлатассине те тивĕçтерме май парать.

Чăваш Ен пĕчĕк ачасем вилессин тата çынсем чĕрепе юн тымарĕсен чирĕсене пула вилессин чи пĕчĕк кăтартăвĕсемпе Раççейре ырă енĕпе пĕрремĕш хут палăрмасть ĕнтĕ.

Шел те, медицина пулăшăвĕ памалли тытăма лайăхлатнине пăхмасăр, çынсем çул çинчи транспорт инкекĕсене пула вилесси çивĕч ыйтусен шутĕнче юлать. Ахăртнех, ăна татса памалли майсем медицинăпа кăна мар, çавăн пекех социаллă пурнăçпа культура сферипе те çыхăннă.

2013 çулта республикăра çитĕннисене анлăн диспансеризаци тăвас ĕç пуçланчĕ. Плана пурнăçланин хăвăртлăхĕ енĕпе Чăваш Ен Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен хушшинче малта пыракансен йышне кĕчĕ. Республикăра пурăнакансен диспансеризаци иртнĕ пайĕн 70 проценчĕ ытла тĕрлĕ чирпе чирленине палăртнă, çакă тухăçлă мерăсене вăхăтра йышăнма май панă тата чирсене аталанма паман. Çав вăхăтрах юлашки çирĕм çулта пуçласа бюджетран самаях укçа-тенкĕ уйăрнă медицина тишкерĕвне хăй ирĕкĕпе 17 пин ытла çын иртме килĕшмен.

Организацисен ертÿçисене 2014 çулта хăйсен ĕçченĕсене диспансеризаци иртес тĕлĕшпе ăнлантару ĕçне туса ирттерме ыйтатăп. Ку ĕç паракансемшĕн те усăллă, мĕншĕн тесен чирсене маларах тупса палăртни ĕçченсем каярах больничнăйĕсем илесрен хăтăлма май парать.

2013-2015 çулсенче республикăра пурăнакан аслăрах çынсем пурте тÿлевсĕр медицина тишкерĕвне тухма пултараççĕ. Ачасем кашни çулах диспансеризаци иртĕç.

Профилактика мерисемпе кăна мар, чирлесе ирттернĕ çыннăн сывлăхне йĕркене кĕртес тĕлĕшпе те тимлĕн ĕçлемелле. Чăваш Енĕн санаторипе курорт тата реабилитаци енĕпе паракан пулăшу ĕçĕсен вăй-хăвачĕ самаях пысăк. Раççей Сывлăха сыхлас ĕç министерствин ертÿлĕхĕ тата çĕр-шывăн 83 регионĕнчи сывлăха сыхлас ĕç ертÿçисем хутшăннă Пĕтĕм Раççейри канашлура Чăваш Ен медицина реабилитацийĕн "ылтăн эталонĕ" пулнине çирĕплетнĕ.

Çапах та сывлăха сыхлас ĕç тытăмĕн тухăçлăхне паракан тĕп хак вăл халăх медицина пулăшăвĕн пахалăхĕпе кăмăллă пулни шутланать, паян ку кăтарту 46 процентпа танлашать. Республикăра Пациентсен канашне туса хунă, унăн ĕçĕн çул-йĕрĕсенчен пĕри социаллă пулăшу паракан организацисен ĕç пахалăхне хак памалли пăхăнман тытăма йĕркелесси, çавнашкал организацисен уçă рейтингне тытса пырасси пулса тăрать. Социаллă сфера учрежденийĕсенче те попечитель канашĕсен институчĕсене чĕртсе тăратмалла, вĕсем паракан пулăшу ĕçĕсен пахалăхне хак паракан пăхăнман экспертсем пулма пултараççĕ. Сывлăха сыхлас ĕç министерстви умне çак ĕçе 2014 çулхи çу уйăхĕн 1-мĕшĕччен туса ирттерме тĕллев лартатăп.

Демографин ырă туртăмĕсене сыхласа хăварма Чăваш Енре хăйсен тухăçлăхне çирĕплетсе панă пысăк пĕлтерĕшлĕ проектсем пурнăçланаççĕ. Вĕсен шутĕнче регионти амăшĕн капиталĕ, нумай ачаллă

Игнатьев Патшалăх Канашне янă Çыру

тутне çирĕплетмелли политикăна малашне те йĕркеллĕн тытса пырĕ, мĕншĕн тесен çемье вăл – этемлĕхĕн тĕп хаклăхĕсенчен пĕри, обществăн никĕсри пайĕ, унта çынсен хушшинчи хутшăнусен мĕн пур енĕ уççăн палăрать. Чăваш Енре пурăнакансен пĕтĕмĕшле социаллă кăмăл-туйăмĕ çемьесем мĕнлерех çирĕп пулнинчен килет.

Хисеплĕ депутатсем!

Патшалăх тата муниципалитет паракан пулăшу ĕçĕсене лайăх пахалăхпа кăресси влаç органĕсенче квалификациллĕ кадрсем пулнинчен килет, çавна май патшалăх тата муниципалитет управленийĕн сферинче кадр политикине лайăхлатас ыйту тухса тăрать. Хальхи требованисем граждан служащийĕсен ретне çĕнетсех тăма, патшалăх влаçĕн органĕсен ĕç-хĕлне тухăçлăрах тăвассине, граждан обществине тата инноваци экономикăна аталантарассине тивĕçтерме пултаракан креативлă, мал шухăшлă ертӳçĕсене шырама хистеççĕ.

Республикăра конкурс никĕсĕ çинче йĕркелекен управлени кадрĕсен резервĕ ĕçлет. Çав вăхăтрах резерврa тăракансен пĕр пайĕ нимĕнле должноçа та уйăрса лартмасăрах унтан тухса ӳкет, ку вара суйласа илес ĕç питех пахалăхлă пулманнине кăтартать.

Çавăнпа та республика влаçĕн ертӳçисен умне çакăн пек тĕллев лартатăп: асăннă резерва йĕркелемелли майсене тепĕр хут пăхса тухмалла. Резервра тăракан ертӳçĕсемпе тăтăшах ĕçлемелле, вĕсене республикăн общество пурнăçне явăçтармалла, хăйсен ăсталăхне ӳстерме майсем туса памалла.

Республикăра пурăнакансем влаçăн коррупцие хирĕçле тăвакан ĕçне пысăка хурса хаклаççĕ. Ку ĕç малалла тăсăлать тата унăн пĕлтерĕшлĕ çул-йĕрĕсенчен пĕри "пĕр чӳрече" йĕркипе ĕçлекен нумай функциллĕ центрсене /НФЦ/ аталантарни шутланать, çавăн пекех асăннă пулăшу ĕçĕсене электронлă майпа кӳни тата влаç органĕсем ведомствăсен хушшинче электронлă майпа хутшăнса ĕçлесси çине куçни пулса тăрать. Тӳре-шара пулăшу илекенпе куçа-куçăн тĕл пулса калаçмалли самантсене май пур таран чакарсан коррупцие çуратакан сăлтавсем те çухалаççĕ. Патшалăх пулăшăвне "пĕр чӳрече" йĕркипе кӳни заявлени паракан патшалăх е муниципалитет служащийĕпе мар, документсене йышăнакан тата пулăшу илнĕ чухне консультаци паракан центр ĕçченĕпе хутшăнассине тĕпе хурать.

Халь ĕçлекен нумай функциллĕ центрсен шутне ӳстернипе пĕрлех, республикăра ял тăрăхĕсенчен ытларахăшĕнче тĕслĕх библиотекăсен никĕсĕ çинче патшалăх тата муниципалитет пулăшăвне илме паракан ыйтса çырнисене йышăнма чӳречесем уçмалли проект та пурнăçланать. 2013 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 120 тĕслĕх библиотека никĕсĕ çинче "пĕр чӳрече" йĕркипе пулăшу кӳме тытăннă. 2015 çул вĕçĕ тĕлне халăхăн çавнашкал пулăшăва илекен пайĕ 90 процентран сахал мар шая çитмелле.

Хисеплĕ ĕçтешсем!

Кăçал Чăваш Енри шкул вĕренĕвĕн тытăмĕ федераци шайĕнче пысăк хака тивĕçрĕ. Пирĕн 12 шкул Раççейри чи лайăх 500 шкул йышне лекрĕ, Шупашкар хулинчи 3-мĕш лицей вара çĕр-шыври чи лайăх 25 шкул шутне кĕчĕ! Вĕсен çитĕнĕвĕн никĕсĕнче – шкулсен администрацийĕ, педагогсен коллективĕ, общество канашĕсем, шкул ачисемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕ пĕрле тухăçлă хутшăнса ĕçлени. Çак факта ашшĕ-амăшĕн комитечĕсемпе попечитель канашĕсем ячĕшĕн çеç ĕçлекен, вĕсем вĕренӳ ĕç-хĕлне тытса пырас ĕç-хĕле чăнласа хутшăнман вĕренӳ учрежденийĕсен ертӳçисене шута илме ыйтатăп. Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тытăма çĕнетме юлашки 3 çулта хушма майпа 5 миллиард тенке яхăн инвестици хывнă. Республикăри шкулсен иккĕ виççĕмĕш пайĕ тĕпрен юсав туса ирттерме бюджетран укçа илнĕ. Шкулсен 70 проценчĕ ытла шкулти апатланăвăн хальхи йышши тытăмне йĕркелесе янă, пĕтĕмĕшле илсен – вĕренекенсен 96 процентне шкулти апатланупа тивĕçтернĕ. Шупашкарти 57 шкулта тата Çĕнĕ Шупашкарти 2 шкулта апатланушăн терминалсенче электронлă карттăсемпе тӳлеççĕ. 2013/2014 çулсенчи вĕренӳ çулĕ вĕçленичченхи тапхăрта республикăри мĕн пур хулари тата хăш-пĕр ялсенчи шкулсенче апатланушăн укçасăр майпа татăлмалли тытăм ĕçе кĕмелле.

Чăваш Енĕн шкул вĕренĕвĕн тытăмĕнче хальхи вăхăтра 138 ресурс центрĕ шутланать. Вĕсенче укçа-тенке, пурлăхпа техникăна тата педагогика ресурсĕсене пĕр çĕре пуçтарнă, çакă аслă классенче вĕренекенсене вĕсем ăçта пурăннине пăхмасăр, лайăх пахалăхлă профильлĕ пĕлӳ парассине йĕркелеме май панă.

Шкул ачисене инженер профессийĕпе кăсăкланассине хавхалантарма шкулсенче физикăпа математика класĕсем уçăлаççĕ, кашни виççĕмĕш шкулта тенĕ пекех инженерипе техника класĕсене, авиамодель тата кимĕ-карап моделĕсен класĕсене уçнă.

2014-2015 çулсенче професси вĕренĕвĕн тытăмĕнчи прикладной квалификацисен нумай функциллĕ 6 центрне тума палăртнă, вĕсем пысăк технологиллĕ производствăсем валли специалистсем вĕрентсе хатĕрлессине тивĕçтерĕç. Çавнашкал пĕрремĕш центр 2013 çулхи пуш уйăхĕнче Шупашкарти транспорт тата строительство технологийĕсен техникумĕнче йĕркеленнĕ. Пысăк предприяти-ĕçтешсемпе пĕрле прикладной квалификацисен корпоративлă центрсен сетьне малалла аталантарма палăртнă, çакă пулас специалистсене технологи процесне туллин алла илме май парать.

Вĕренӳ тытăмĕн, ачан çынлăх паллисене аталантармалли ĕç-хĕл никĕсĕ шкулченхи вĕренӳ пулса тăрать. Ачасене ача сачĕсенче вырăнсемпе тивĕçтерес енĕпе илнĕ тивĕççене эпир сирĕнпе йĕркеллĕн пурнăçласа пыратпăр.

Патшалăх тата муниципалитет вĕренӳ учрежденийĕсемсĕр пуçне Чăваш Енре патшалăхăн мар 6 ача сачĕ, çавăн пекех уйрăм çын тытса тăракан 20 ытла центрпа студи ĕçлеççĕ, вĕсем шкулченхи ӳсĕмри ачасене пăхса тата асăрхаса тăрас ĕçе пурнăçлаççĕ. Ку çул-йĕре вăйлатмалла. Шкулченхи вĕренĕве йĕркелес ĕçе бизнеса хутшăнма пулăшса эпир ача сачĕсенчи черетсемпе çыхăннă çивĕч ыйтăва кăна татса памастпăр, çавăн пекех вĕренӳ енĕпе паракан пулăшу ĕçĕсен рынокĕнче конкуренцие аталантарма та пулăшатпăр. Çакă вара юлашкинчен шкулченхи вĕренӳ халăхăн тĕрлĕ сийĕшĕн юрăхлă пулассине тата унăн пахалăхне ӳстерме пулăшать.

Çулталăк çурăнченхи ӳсĕмри ачасене эпир ача сачĕсенчи вырăнсемпе 2015 çулта тивĕçтеретпĕр. Республикăри шкулченхи вĕренӳ учрежденийĕсенче 3 çултан аслăрах ачасен черетне вара, паян çакна çирĕплетсех калама пулать, пĕтĕмпех пĕтернĕ!

Çамрăксене патриотлăх воспитанийĕ парассине тата доброволецсен юхăмне аталантарассине, паянхи кун асăннă юхăм ĕçне 42 пин волонтер хутшăнать, уйрăмах тимлĕн пăхмалла. Çакă республикăра пурăнакан пĕтĕм çамрăксен йышĕн 15 процентне яхăн.

2013 çулта çамрăксен пуçарăвĕсене пулăшу памалли тата аталантармалли Пĕтĕм Раççейри "Манран ан юл", "Команда-2018", "Ырă кăмăл технологийĕ" проектсене Чăваш Енри 450 ытла доброволец хутшăннă. Республикăри волонтерсем Хусанта иртнĕ Пĕтĕм тĕнчери çуллахи XXVII Универсиадăна та хутшăннă, халĕ пирĕн каччăсемпе хĕрсем 2014 çулта Сочи хулинче иртекен Хĕллехи XXII Олимп вăйăисене хутшăнма хатĕрленеççĕ.

Чăваш Ен çамрăкĕсем Раççей Президенченĕн Атăлçи федераци округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич пуçарнă проектсене те хастарăн хутшăннă. Республика команди уйрăмах Сочи хулинче иртнĕ Пĕтĕм Раççейри спорт туризмĕн фестивалĕнче ăнăçлă ăмăртнă, унта пирĕн туристсем пĕрремĕш вырăн йышăннă. "Гвардеец" оборонăпа спорт лагерьне, çавăн пекех округри "Атăлçи Зарници" çарпа спорт вăйăисене хутшăннă çамрăксем те Чăваш Ен чысне çӳллĕ шайра хӳтĕленĕ.

Раççей Федерацийĕн Оборона министерстви ирттерекен смотр-конкурсри пирĕн çĕнтерӳ çамрăксене воспитани парас ĕç тухăçлăхĕн ырă кăтартăвĕ пулса тачĕ. 2012 çул пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх Чăваш Республикине çар учетне тата саппасри граждансене броньлассине йĕркелесе пырас енĕпе çĕр-шыври чи лайăх регион тесе ыйтăннă.

Республикăри кадетсен корпусне туса хуни ачасемпе çамрăксене воспитани парас енĕпе комплекслă майпа тăвакан ĕçсен йышне малалла тăснин лайăх тĕслĕхĕ пулассăн туйăнать. Чăваш Ен Вĕренӳ министерствин çак ыйтăва татса парассипе çыхăннă сĕнӳсене 2014 çулăн пĕрремĕш çурринче тăратмалла.

Паян çамрăк çынсен ытларах та ытларах пайĕ япăх йăласенчен пăрăнса сывă пурнăç йĕркине суйласа илет. Çакна тума вĕсене влаç органĕсем спорт сооруженийĕсен тытăмне аталантарас енĕпе тăвакан тухăçлă ĕç пулăшать. Юлашки çулсенче Чăваш Ен спорт инфратытăмĕн аталанăвне тĕрлĕ çăл куçран 5 миллиард ытла укçатенкĕ хывнă, 50 ытла спорт объекчĕ тунă тата юсаса çĕнетнĕ. Ачасемпе çамрăксен Олимп резервĕсене хатĕрлекен ятарлă 10 спорт шкулĕнчен тăххăрăшĕ кăçал Раççей олимпиецĕсене пулăшу памалли фондăн грантне тивĕçнĕ.

Чăваш Енре пурăнакан кашни виççĕмĕш çын спортпа туслă. Халăх йышлăн хутшăнакан спорт акцийĕсем вăй илсе пыраççĕ, вĕсем унта хутшăнакансене пысăк хастарлăх тата лайăх кăмăл-туйăм кӳреççĕ. Сăмахран, Шупашкар хулин кунĕнче ирттернĕ "Çăлтăрпа пĕрле – зарядкăна" акцие 28 пин çын хутшăннă тата ăна Европа Рекорчĕсен кĕнекине кĕртнĕ.

Республикăн спорт çитĕнĕвĕсене Раççей тата тĕнче шайĕнче тивĕçлипе хак панă. Чăваш Ен сумлă ăмăртусене – 2015 çулта çăмăл атлетика енĕпе Европăн командăсен чемпионатне, 2016 тата 2018 çулсенче хăвăрт утас енĕпе Тĕнче кубокне – ирттерме ирĕк илнĕ.

Физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе тунă пирĕн çитĕнӳсене федераци наградисемпе палăртнă. 2012 çул пĕтĕмлетĕвĕпе республика физкультурăпа спорт ĕçне чи лайăх йĕркеленине тупса палăртас енĕпе ирттерекен Пĕтĕм Раççейри смотр-конкурсра Раççей Федерацийĕн субъекчĕсем хушшинче иккĕмĕш вырăна тухнă. Юлашкинчен тата, иртсе пыракан çула пĕтĕмлетнĕ май, Раççей Правительстви пуçласа Чăваш Ене "Раççей регионĕ" номинацире физкультурăпа спорт енĕпе паракан наци премийĕпе чысланă. Пирĕн республикăна Раççей Федерацийĕнче спортпа туслă чи лайăх регион тесе йышăннă тата ĕнер эпĕ Раççей спорт министрĕн Виталий Леонтьевич Мутко аллинчен награда илтĕм.

Спортпа туслă мĕн пур çынна, сывă пурнăç йĕркине тытса пыракансене пурне те сумлă та тивĕçлĕ çак наградăпа саламлатăп!

Экологин лайăх лару-тăрăвĕ, влаç органĕсен уççăн пурнăçлакан ĕçĕ, тухăçлă экономика, пахалăхлă медицина, хальхи вăхăтри вĕренӳ, çирĕп сывлăхлă халăх - çак тĕп пайсем Чăваш Ен сăнарне, унăн инвестици илĕртӳлĕхне йĕркелеççĕ.

"Эксперт РА" рейтинг агентствин кăтартăвĕсемпе килĕшӳллĕн Чăваш Республики Раççейри инвестици тевĕткеллĕхĕ чи пĕчĕк шутланакан регионсен пĕрремĕш теçеткинче тăрать. Анчах та инвестор хайĕн укçи-тенкине хывма пирĕн республика экономикине суйласа илтĕр тесен пайтах тăрăшса ĕçлемелле. Инвестици ĕçĕ-хĕлĕшĕн лайăх майсем туса парасси республикăн ĕç тăвакан влаç органĕсен тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тӳрĕ тивĕçĕ шутланать, вĕсен ку енĕпе ĕçе тытăмлăн, тĕллевлĕн тата тухăçлă йĕркелемелле.

Паян Чăваш Енре Чăваш Республикин Ĕç тăвакан влаç органĕсен лайăх инвестици климатне тивĕçтерес енĕпе тумалли ĕç-хĕл стандартне, Чăваш Республикин Инвестици декларацине, Чăваш Республикин 2020 çулченхи Инвестици стратегине, инфратытăм объекчĕсен строительствин планне йышăннă.

Производство объекчĕсене вырнаçтарма юрăхлă инфратытăм – Шупашкар хулин индустри паркĕ – йĕркеленет. Нормативправо акчĕсен йĕркелесе пымалли витĕмне хак памалли регламента çирĕплетнĕ, Чăваш Республикин Пуçлăхĕ çумĕнче Инвестици климатне лайăхлатас енĕпе ĕçлекен канаш туса хунă, çавăн пекех Twitter социаллă сетьре инвестора Чăваш Ен Пуçлăхĕпе сыхăнма май паракан тӳрĕ сыхăну каналне йĕркеленĕ.

Инвестора мĕнле-тĕр çăмăллăхсемпе, уйрăмах налук сферинче тивĕçтерни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Пĕтĕмĕше илсен – республикăра инвестицин лайăх майĕсене туса хунă, рынокри мĕн пур субъектшăн уçă, мĕн пулассине пĕлме пулакан пĕр тан вăйă йĕркисене çирĕплетнĕ. Инвесторсене республика бюджетне куçарса памалли налуксене тӳленĕ чухне организацисен тупăшĕнчен тата пурлăхĕнчен илекен налуксен пайĕнче çăмăллăхсемпе тивĕçтереççĕ, инвестици налук кредичĕсем, Чăваш Республики патшалăх гарантийĕ панипе коммерци кредичĕсем, инвестици площадкисене тулли хатĕрлĕхпе туса çитерме субсидисем тата ытти çăмăллăхсем параççĕ.

Çакна пăхмасăр ку мерăсем çителĕксĕр тесе шухăшлатăп тата Чăваш Ен инвестици илĕртӳлĕхне ӳстермелли хушма майсем йышăнма сĕнетĕп.

Патшалăх Канашĕн тата Министрсен Кабинечĕн республика аталанăвĕшĕн стратеги пĕлтерĕшлĕ ĕç-хĕл пурнăçлакан инвесторсене малашне икĕ çуллăха "налук каникулĕ" туса памалли мая пăхса тухмалла.

Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ертӳçисен Минстрсен Кабинечĕпе пĕрле бизнеса аталантармалли инфратытăм тăвас енĕпе пурнăçлакан ĕçне вăйлатмалла. Сăмахран, кашни районтах "кĕмелли" уçă майсемпе промышленноç площадкисем, индустри паркĕсем тума çĕр лаптăкĕсем йĕркелемелле. Инвесторăн çав çĕр лаптăкĕсем, унти пур пек коммуникацисем тата вĕсен çумне çыхăнтармалли майсем, аренда тӳлевĕ, налук йĕрки çинчен ирĕклĕн те туллин пĕлме майсем пулмалла. Мĕн пур муниципалитет пĕрлĕхĕнчех инвесторсемпе "пĕр чӳрече" йĕркипе хутшăнса ĕçлессине тивĕçтермелле.

Паллă ĕнтĕ: инвестор хăйĕн прависене тата пурлăхне хӳтĕлессине патшалăх гарантилекен региона суйласа илет. Чăваш Республикин экономикине ют çĕр-шыв инвестицийĕсене явăçтарасси çинчен калакан саккун йышăнмалла тесе шухăшлатăп.

Чăваш Ене инвесторсемшĕн уçă регион пек палăртас тĕлĕшпе тăвакан ĕç йĕркеллĕн пулса пырать. Республикăна тĕнчери малта пыракан икĕ рейтинг агентстви - Fitch /Фитч/ тата Moodey's /Мудис/ пĕр харăсах "стабильлĕ" кредит рейтингне панă.

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕсем

Унта инвестици проекчĕсене пурнăçлама палăртнă пĕтĕмĕшле лаптăкĕ 368 гектарна танлашакан 124 çĕр лаптăкĕ çинчен пĕлтерекен сведенисене вырнаçтарнă.

Халĕ усă курман тата тухăçсăр усă куракан мĕн пур çĕр лаптăкĕн реестрне тăвассине тивĕçтермелле. Асăннă ĕçĕн тухăçлăхне ӳстерме "халăх инвентаризацийĕн" мелĕпе усă курма пулать, урăхла каласан – хуçасăр çĕр лаптăкĕсене граждансем пулăшнипе тупса палăртмалли мелпе. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен умне тĕллев лартатăп: сывăх икĕ çулта ирĕклĕ çĕр лаптăкĕсене туллин инвентаризацилессине тата вĕсене йĕркелесе çитерессине туса ирттермелле.

Ку енĕпе тумалли иккĕмĕш утăм – йĕркелесе çитернĕ çав çĕрсене пулас инвесторсене хăйсен проекчĕсене пурнăçлама аукцион урлă уйăрса парасси.

Инвестици ĕçĕнчи тĕп çитменлĕхсенчен пĕри влаç органĕсенче тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенче килĕшӳ ĕçĕсене туса ирттерессипе çыхăннă чăрмавсем пулнине палăртатăп. Хăш чухне документсене килĕшӳллĕ тăвас ĕç темиçе çула тăсăлать.

Коммуналлă тата энергетика инфратытăмĕсем çумне çыхăнтармалли, строительство тума ирĕк илмелли вăхăта май пур таран кĕскетмелле. Ĕçе юриех тăсса пыракан кашни тĕслĕхех тивĕçлĕ хак памалла тата, енчен те çав чăрмав сăлтавĕ çынсемпе çыхăннă пулсан, вĕсен тĕлĕшпе тивĕçлĕ йышăнусем тумалла.

Республикăра предпринимательлĕхе патшалăх пулăшăвĕ памалли тытăм ăнăçлă ĕçлет. Бизнес представителĕсемпе влаç органĕсем хушшинче сиксе тухакан тавлашусене йĕркене кĕртме Предпринимательсен прависене хӳтĕлес енĕпе ĕçлекен уполномоченнăй институтне туса хунă.

2013 çулта вак тата вăтам предпринимательлĕх субъекчĕсене панă патшалăх пулăшăвĕн калăпăшĕ 356 миллион ытла тенкĕпе танлашнă. Çав хушăра пилĕк çул каярах ку хисеп 30 миллион тенкĕрен кăшт кăна нумайрах пулнă. 2013 çулта бизнесăн вак тата вăтам субъекчĕсенчен Чăваш Республикин пĕрлештернĕ бюджетне налуксем хаклав тăрăх 2 миллиард тенкĕ ытла пырса кĕмелле, çакă иртнĕ çулхинчен 10,6% ытларах.

Чăваш Енри вак тата вăтам бизнес предприятийĕсене юлашки 3 çулта аталантарнин пĕтĕмлетĕвне тунă май çакна палăртатăп: вĕсене пулăшма бюджетран 1,1 миллиард тенкĕ ытла уйăрнă. Микротата пĕчĕк предприятисенче ĕç вырăнĕсен шучĕ 2013 çулта 13,8% чухлĕ пысăкланнă тата 123 пин çынпа танлашнă. Вак тата вăтам бизнес субъекчĕсем тиесе ăсатнă продукци калăпăшĕ çак тапхăрта 1,5 хут ӳснĕ тата паян вăл 190 миллиард тенкĕпе танлашать. Пĕр çын пуçне тивекен ĕç тухăçлăхĕ, 2013 çулхи пĕтĕмлетӳ тăрăх, 1,5 миллион тенке çитет.

Ĕç кăтартăвĕсем чăнах та витĕмлĕ, çапах та вĕсемпе лăпланса лармалла мар. Раççей Пĕтĕм тĕнчери суту-илӳ организацине кĕнĕ условисенче инноваци тата экспорт тĕллевлĕ предпринимательлĕхе пулăшассине, производствăна модернизацилессине тата оборудование çĕнетессине уйрăмах тимлĕн пăхмалла. 2014 çулта вак тата вăтам производствăсене вырнаçтармалли темиçе инфратытăм проектне пурнăçлама палăртнă.

Право пултарулăхĕн пахалăхне ӳстернине, тĕплĕ шутласа тăвакан йĕркелӳ йышăнăвĕсене çирĕплетмелли уçă тата ăнланмалла майсем туса хунине пула инвестиципе предпринимательлĕх климатне лайăхлатма **йĕркелесе пымалли витĕме хаклакан институт** пулăшма тивĕç. Ăна хута яни йышăнусене туса хатĕрлес ĕçе ведомство пӳлĕмĕсен тулашĕнче пурнăçлама, норматив-право акчĕсен проекчĕсене сӳтсе явмалли тухăçлă площадкăсем йĕркелеме май пачĕ. Çакăн пек ĕçлени паян, чăн малтанах, предприниматель пĕрлĕхне питĕ кирлĕ, мĕншĕн тесен вăл бизнес ĕçне тытса пыма чаракан административлă хушма чăрмавсем тума май памасть.

Инвестици хастарлăхне пĕтĕмĕшле пулăшса пынипе пĕрлех, патшалăх политики "ӳсĕм вырăнĕсем" çине уйрăмах тимлĕн пăхма палăртать, кусем – пысăк пĕлтерĕшлĕ проектсенчен пĕри Шупашкарта ВТБ 24 Банкăн сервис центрне туса хурассипе çыхăннă, вăл хăйĕн пулăшăвĕпе Раççейĕн Европа пайне тивĕçтерсе тăрĕ. Çак проекта ВТБ 24 1,4 миллиард яхăн укçа-тенкĕ хывма палăртать тата вăл асăннă банкăн 2014 çулти чи пысăк инвестици проекчĕ шутланать.

Пысăк ĕç укçиллĕ пĕр пин çурă ĕç вырăнĕ йĕркеленмелле. Професси пĕлĕвĕ паракан вĕренӳ заведенийĕсенчен вĕренсе тухакансем валли çавна пула ĕçе вырнаçма лайăх майсем пулаççĕ.

Пирĕн ĕçри тĕп тĕллевсенчен пĕри – монохуласене модернизацилесси. Сăмахран, Улатăр хулин инвестицин комплекслă планне пурнăçлама мĕн пур шайри бюджетран 1,2 миллиард ытла уйăрнă, Çĕнĕ Шупашкара пулăшма – 2,6 миллиард тенкĕ. Çав хуласене аталантарма халĕччен çавнашкал пысăк калăпăшпа укçа-тенкĕ пĕрре те уйăрман.

Йышăннă мерăсене пула хулан пĕтĕмĕшле тиесе ăсатнă таварĕсен калăпăшĕнче пĕчĕк предприятисен тӳпи пысăкланнă, хушма ĕç вырăнĕсем йĕркеленĕ, шута илнĕ ĕççĕрлĕх шайĕ Улатăрта 5 хут, Çĕнĕ Шупашкарта 7 хут чакнă. Хальхи вăхăтра Раççей Правительстви патшалăх пулăшăвне илме шутлакан монохуласен йышне çирĕплетнĕ, унта Канаш монохула та кĕнĕ.

Малашлăхлă инвестици çул-йĕрĕсенчен пĕри – туризм. 2013 çулта федерацин "Раççей Федерацийĕнче шалти тата килсе çӳремелли туризма аталантарасси /2011-2018 çулсем/" тĕллевлĕ программине "Чăваш Енри халăх ушкăнĕсем" туризмпа кану кластерне тумалли проекта кĕртнĕ. Ăна пурнăçлани пирĕн республикăна килсе çӳрекен туристсен йышне 2 хут ытларах ӳстерме май парать. Проектăн пĕтĕмĕшле хакĕ 7,5 миллиард ытла тенкĕпе танлашать, çав шутран 5,6 миллиард ытла тенкĕ уйрăм инвесторсем хывĕç. Федераци бюджетĕнчен 1,7 миллиард тенкĕ явăçтарма палăртнă, республика бюджечĕн тăкăнĕсем 300 миллиона яхăн тенкĕпе танлашаççĕ.

Республикăна газ кĕртес ĕçе "Газпром" АУО 1 миллиард тенкĕ ытла инвестици хывма палăртать. 2013 тата 2014 çулсенче çĕнĕ çурт-йĕр районĕсене, çавăн пекех Шупашкарти тата Çĕнĕ Шупашкарти промышленноç зонисене çут çанталăк газĕпе тивĕçтерсе тăма палăртакан 4 объект туса хута ямалла. Кăçал Атăл леш енне газ кĕртмелли программăна пурнăçлама тытăннă, çак ĕçе "Газпром" 600 миллиона яхăн укçа-тенкĕ хывать. Çав территорире сывлăха çирĕплетмелли медицина объекчĕсене тума тата сывлăха лайăхлатакан туризма ăнăçлăн аталантарма питех те лайăх майсем йĕркеленеççĕ. Анчах та палăртса хунă плансем пурнăçланччăр тесен хатĕрленӳ ĕçĕсене паянах пысăк шайпа туса ирттермелле, çав шутра пулăшу ĕçĕсем паракан сферăри сервис шайне те палăрмаллах ӳстермелле. Паянхи кун тĕлне йăпану тата сывлăха çирĕплетмелли учрежденисенче, косметика салонĕсенче тата общество апатланăвĕн организацийĕсенче унта пырса çӳрекенсене паракан пулăшу шайĕ, çемçен каласан, çӳллĕ шайрах мар.

Пирĕн халăх яланах тараватлăхĕпе палăрса тăнă. "Хăнана лартма сакки те пулмасан, ку çын чăваш мар тенĕ", – палăртать халăх ăсĕ. Пирĕн хуласенче пулса курнă чылай турист вĕсенче пурăнакан çынсем ырă кăмăллă, пулăшма хатĕр тата ыр сунăмлă пулнине палăртать. Суту-илӳ тата пулăшу ĕçĕсем паракан сферăсен организацийĕсенче те клиент тĕлĕшпе çăвăн пек ырă та тарават хутлăх йĕркелемелле. Клиента хăйсен майлă çавăрас тесе тăрăшман предприятисем тем тесен те, рынок экономикин условийĕсенче конкурентлă пулма пултараймаççĕ. Енчен те çавнашкал предприятисем йĕркеллех тытăнса тăраççĕ тата малалла та аталанаççĕ пулсан, ку пĕр çакна кăна çирĕплетет – экономикăн çак сыпăкĕнче кирлĕ пек конкуренци çук. Экономика аталанăвĕн министерствине тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене суту-илӳпе пулăшу ĕçĕсен сферин организацийĕсенче пулăшу памалли ĕç культурине ӳстерес енĕпе мерăсем йышăнма кирлĕ тесе шухăшлатăп.

Çакна лайăх ăнланмалла: турист вăл - инвестор, унăн укçи-тенки республика экономикине аталантарас ĕçе хутшăнать. Унашкал çынсем тĕлĕшпе тимсĕр пулма юрамасть!

Хаклă ентешĕмĕрсем!

Раççейре 2014 çула Культура çулталăкĕ тесе пĕлтернĕ.

Халăха сыхласа хăварас ĕç чи малтан кил-йышран, çемьерен пуçланать. Тăван килте ашшĕ-амăшĕ пĕр-пĕринпе, çав хушăрах ачисемпе те чăвашла калаçсан, вĕсене халăхăмăрăн йăли-йĕркипе, чĕлхипе, ташши-юррипе мĕн пĕчĕкрен паллаштарса пырсан тата юратма-хисеплеме вĕрентсен çак ĕçе пурнăçлама çăмăлрах пулĕччĕ.

Патшалăх влаçĕн органĕсен, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен, культурăпа вĕренӳ ĕçченĕсен, халăх пĕрлешĕвĕсен пайташĕсен чăвашлăха сыхласа хăварас ĕçре чи малта пулмалла.

Пирĕн çамрăк ăру çине уйрăмах тимлĕн пăхмалла. Вĕсем пуян тăван культурăпа тата историпе мухтанма-мăнаçланма тытăнсан, йăла-йĕркене çĕнĕлĕхсем кĕртсех пырсан халăхăмăр сыхланса юлас шанчăк пур. Нумай çул аталанса пынă халăх çĕр пичĕ çинчен çухалмалла мар. Ку енĕпе пирĕн пурин те çине тăрсах ĕçлемелле.

Чăваш Республикин хальхи вăхăтри культура политикин тĕп тĕллевĕсенчен пĕри вăл – çынна пултарулăх тĕлĕшĕнчен ӳсме, хăйĕн ăс-хакăлне аталантарма условисемпе майсем туса парасси.

Республика территорийĕнче 28 наци культура пĕрлешĕвĕ ĕçлет. 2013 çулта туса ирттернĕ социологи тĕпчевĕн пĕтĕмлетĕвĕ республикăра пурăнакансем хăш халăх çынни пулни тата мĕнле тĕне ĕненни енĕпе хăйсене хĕсĕрленине туйманнине çирĕплетсе пачĕç. Чăваш Республикин нумай наципе халăхĕ пĕрпĕринпе тату та килĕштерсе пурăнать. Ку – пысăк çитĕнӳ, мĕншĕн тесен тăнăçлăхпа татулăх пире ырă пуласлăх пиллеççĕ.

"Культура" ăнлав этемлĕх цивилизацийĕ нумай ĕмĕр хушшинче туса çитернĕ илемлĕх хакларăсене кăна палăртмасть, вăл çынсен хушшинчи хутшăнусен мĕн пур сферине пырса тивет. Производство культурисĕр паян ĕçĕн пысăк тухăçлăхне тивĕçтересси пирки шухăшламалли те çук, дискусси культури çивĕч ыйтусене кирлĕ пек татса памалли тата тĕрĕс йышăнусем тумалли никĕс пулса тăрать, пулăшу ĕçĕсен рынокĕнчи конкурентлăх вара пахалăхлă сервис пулнинчен килет. Культурăна, унăн пĕлтерĕшне анлăн ăнланса, тăтăшах ӳстерсе пырасси пирĕн республикăра норма пулса тăмалла.

Чăваш Ен тĕлĕнмелле илемлĕ те пуян. Хăйĕн çут çанталăкĕпе, историйĕпе, сайра тĕл пулакан культура еткерĕпе, йăли-йĕркипе тата мешехисемпе, ĕçчен те ырă, уçă кăмăллă, тарават çыннисемпе пуян. XXI ĕмĕрти условисенче, тĕнчере глобализаци процесĕсем вăйра тăнă тапхăрта, пирĕн халăхăмăршăн питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ шутланакан ăс-хакăлпа кăмăл-сипет хаклăхĕсене хамăр хыççăн килекен ăрусем валли сыхласа хăварма тăрăшмалла.

Çав хаклăхсем тăвансемпе сывăх çынсене чунтан юратмаллине, тăван ен ырлахĕшĕн яваплă пулмаллине, ĕç çыннине хисеплемеллине çирĕплетеççĕ. Ĕнчен те паянхи çамрăксем вĕсене тивĕçлипе йышăнсан Чăваш Ене ырă пуласлăх кĕтет тесе çирĕплетсех калама пулать. Мĕншĕн тесен хамăр республикăна эпир пултаруллă ĕçпе çеç илемлĕрех те пуянрах тăваятпăр. Тăнăçлăха, килĕшĕве тата пĕр-пĕрне ăнланнине упраса пурăнса кăна эпир экономикăна аталантармалли, обществăн социаллă кăмăл-туйăмне лайăхлатмалли, çемьесенче вара сывă, ашшĕ-амăшĕ савăнса кĕтекен хаваслă ачасем çуралмалли майсем туса хума пултаратпăр!

Итленĕшĕн пысăк тав!

Тема тăсăмĕ ● 4 стр.➡

Михаил Игнатьев Çырăвне хаклаççĕ

Юрий ПОПОВ, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ: Раççей Президенчĕ Владимир Путин тин çеç хăйĕн Çырăвĕнче анлă тĕллевсем палăртнăччĕ, республика Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн Çырăвĕнчи тĕллевсем те унтипе пĕр саслă.

Республика Пуçлăхĕ Конституци гаранчĕ тетпĕр пулсан пирĕншĕн, саккун кăларакансемшĕн, саккун кăларассипе сыхăннă пуçарусем чи малта пулмалла. Татса памалли нумай: çав шутра вĕрентĕве аталантарасси те, строительство та, пурăнмалли çурт-йĕр тума çĕр лаптăкĕсем уйăрасси те... Çырура нумай саманта уçăмлатнă, пирĕншĕн тĕллевсем паллă.

Валентин ШУРЧАНОВ, РФ Патшалăх Думин депутачĕ: Тутарсемпе, ытти халăх çыннисемпе юнашар пурăнатпăр, анчах пирĕн республикăра нацисен хутшăнăвĕсенче çивĕчлĕх çук – çакă питĕ лайăх. Малалла та пурин те туслă пурăнмалла – Çырура çак шухăша палăртни тĕрĕс.

Пĕтĕмĕшле илсен те нумай самант кăмăла кайрĕ. Çапах ĕçлемелли нумай-ха. Ял хуçалăхнех илер: пирĕн шухăшпа – фермерсем, уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсем кăна пире тăрантараймĕç. Вĕсен ĕç тухăçлăхĕ пысăк мар. Пысăк хуçалăхсем, ял хуçалăхĕнче индустри мелĕсемпе, наукăна тĕпе хурса ĕçлекенскерсем, кăна чăннипех пысăк тухăça тивĕçтерĕç. Авă, Мари Элти Звенигово хуçалăхĕнче 170 пин пуç ытла сысна. 1 кг аш илме пĕтĕмпе те 3,5 кг выльăх апачĕ кирлĕ – акă вăл ĕç тухăçлăхĕ! Çак çулпа малалла утмалла.

Пур енчен илсен те хамăрăн производствăна, заводсене ĕçлеттерме тăрăшмалла. Паян Шупашкара килнĕ чух вакунра Канашсемпе пĕрле пултăм. Каласса кайрăмăр та – унти вакун юсакан завод, ĕлĕкхи ВРЗ, ĕçлеймест иккен – вакунĕсем кирлĕ мар теççĕ. Кирлĕ-çке! Эппин, чупмалла, çÿремелле! Влаçри кашни çынна пайăр ĕç шанса памалла. Ак, манпа юнашар Евсеев депутат тăрать. Вăт, ăна каламалла: çак ĕçе туса парăр. Ну, мана та пĕр-пĕр ĕç шанса паччăр. Çапла пĕрле ĕçлесен ăнăçу пулатех.

Николай УГАСЛОВ, Чăваш наци конгресĕн президенчĕ, ПК депутачĕ: Çырура чăвашлăх, тăван чĕлхе, халăх çинчен калани кăмăла кайрĕ. Ку енĕпе ĕçлесси – чăннипех анлă ĕç. Чи малтанах пирĕн пурин те хамăр чăваш пулнине ăнланмалла: çакăнтан вăтанмалла мар – мухтанмалла! Чăваш авалтанпах ĕçчен халăх пулнă. Çак ĕçченлĕхе çирĕплетсе пысран малалла каятпăрах. Пирĕн мăнаçланмалăх çынсем пур! Çакна ачасене те шкул çулĕсенчех ăнлантармалла. Паллах, глобализаци текенни ура хурать, анчах республика влаçĕсем ку енĕпе ĕçлени – лайăх. Çав шутра Конгресс та çине тăрса ĕçлĕ.

Владимир ИВАНОВ, ЧР предпринимательсен прависем енĕпе ĕçлекен уполномоченнăйĕ: Çырура экономика аталанăвĕн принципĕсене уçăмлă палăртнă. Патшалăх влаçĕн тата муниципалитетсен инвестицисем илсе килес енĕпе тĕпе хумалли принципсем те уçăмлă. Çĕнĕлĕх – республикăна ют çĕр-шывсен инвестицийĕсене илсе килесси çинчен калакан саккуна йышăнма сĕнни. Унашкалли, эпĕ пĕлнĕ тăрăх, кÿршĕ регионсенче те çук-ха. Çав саккунра ют çĕр-шыв бизнесĕ Чăваш Ен рынокне килсен усă курма тивĕç çăмăллăхсене пайăрăн палăртнă.

Çавăнпа пĕрлех бизнесшăн «пĕр чÿрече» йĕркелени пысăк пĕлтерĕшлĕ – кун пирки те сăмах пулчĕ. Çак тытăм çитес çултан чăнласах ĕçлеме пуçлĕ: предприниматель пĕр организацие пырать те ирĕк паракан пĕтĕм документацие унта хатĕрлет, тĕрлĕ инстанцие чупма тивмĕ. Нумай чăрмав сирĕлет.

Леонид ВОЛКОВ, Чăваш Республикин РФ Президенчĕ çумĕнчи полномочиллĕ представителĕ: Пайăр тĕллевсем палăртакан Çыру, патшалăхăн влаç органĕсемшĕн, обществăшăн, халăхшăн пĕрле ĕçлемелли никĕс.

Чи малтанах республикăна инвестицисем илсе килес енĕпе çине тăма сĕнни килĕшрĕ. Пĕлетпĕр-çке: объективлă сăлтавсене кура Чăваш Ен капитал тĕлĕшпе дефицитлă регион. Хамăрăн майсем çине таянса кăна экономика ÿсĕмĕн хăвăртлăхне тивĕçтерме йывăр. Влаç, общество, бизнеспĕрлĕх хутшăнăвĕсене тăрă тăвас ăнтăлăва палăртас килет. Вăл е ку региона укçа хывма шут тытнă инвесторшăн инвестицисем каялла тавăрассине шантаракан гарантисем кирлĕ. Ку вара хайхи тăрăлăхсăр пулма пултараймасть. Çавăнпа пĕрлех ĕç тухăçлăхне ÿстерни пысăк пĕлтерĕшлĕ – влаç органĕсемшĕн те, бизнесшăн та. Çав тухăçлăх пулмасан экономика конкуренцие тÿсеймĕ. XXI ĕмĕрте пурăнатпăр вĕт – паян производство аталанăвне вырăнти шайпа кăна виçни, регион условийĕсемпе çырлахни çителĕксĕр – Раççей, тĕнче шайĕпе ĕçлемелле. Çырура çакна та палăртнă.

Николай МАЛОВ, ЧР Патшалăх Канашĕн Патшалăх строительстви, вырăнти хăй тытăмлăх енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ: Хăшĕ-пĕри, тен, çак Çыруран сенсаци кĕтнĕччĕ пуль. Турра шĕкĕр, унашкалли пулмарĕ – аталанушăн тăнăçлăх пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Чи кирли – 2013 çула пĕтĕмлетнĕ май çитĕнÿсене те, çитменлĕхсене те палăртни. Çитес çула илес тĕк – чăн хаклăхсем патне таврăнтăмăр: тăван чĕлхене, тăван тăрăха юратасси, пĕр-пĕрне хисеплесси. Республика Пуçлăхĕ уççăн çирĕплетрĕ: вĕсем пирĕн пурнăçăмарта пулсан Чăваш Ен аталанĕ, тăнăçлăх вăй илĕ, РФ Президенчĕ пĕлтĕрхи çу уйăхĕнче кăларнă указсемпе çыхăннă социаллă проектсем те пурнăçланĕç.

Игорь КУШЕВ, ЧР Патшалăх Канашĕн Социаллă политика тата наци ыйтăвĕсем енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕн çумĕ: Управлени тытăмĕ çине лекекен тиев ÿсет – çакна туйрăм. Территори сĕмĕллĕ пĕтĕм ĕç – муниципалитетсен шайĕнчи влаç органĕсен компетенцийĕ. Çакна РФ Президенчĕн Çырăвĕнче те палăртнăччĕ, ку шухăш паян та янăрарĕ. Пĕтĕмлетÿ турăм: çакăн хыççăн муниципалитетсене укçа килмеллех. Паян вара мĕнле пулса тухать-ха: вырăнти влаç çине полномочисем тиетпĕр, анчах федерацин 131-мĕш саккунĕпе вĕсене укçа памастпăр. Вĕсем ĕçлеме хатĕр, анчах пултараймаççĕ. Пĕр утăм айккинелле тусанах – перçе пăрахма хатĕр: прокуратура килет те – кунта пăснă, унта пăхăнман... Çакăнтан хăтăлмарăмăр тăк аталанăвăн тивĕçлĕ пахалăхĕ пулмĕ.

Константин КИРГИЗОВ, Раççей Перекет банкĕн Чăваш уйрăмĕн управляющийĕн тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ: Çырура республикăшăн çитес вăхăтра тĕп вырăнта пулмалли тĕллевсене палăртнă. Хамăра илес тĕк – унта пирĕншĕн те тишкермелли, шухăшламалли нумай. Чи малтанах – çав тĕллевсене пурнăçламашкăн хутшăнас тĕлĕшпе. Тен, хăш-пĕр енĕпе эпир хутшăнасси халĕчченхинчен анлăрах пулмалла пуль, ку Чăваш Ен Пуçлăхĕ палăртакан тĕллевсене ăнăçлă пурнăçлама кирлĕ. Манăн шухăшăмпа – эпир республика ертÿçисем хамăртан кĕтнине тÿрре кăларма пултаратпăр.

Андрей КУЛАГИН, ЧР Патшалăх Канашĕн Бюджет, финанс тата налуксем енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕн çумĕ, РЛДП фракцийĕн лидерĕ: Влаçăн уçă пулмалла текен шухăш янăрарĕ – çакă пысăк пĕлтерĕшлĕ. Мĕншĕн тесен чиновниксем пирки пурте уçă тееймĕн. Депутат ыйтăвĕсем яратпăр та – ячĕшĕн хуравлаççĕ. Ку вара тепĕр чух коррупцие те сăлтавлама пултарать, кунашкаллинчен тасалмалла. Кăмăллă тепĕр шухăш – «чăваш халăхĕ – тĕп хаклăх» тени.

■ **Николай КОНОВАЛОВ ыйтса пĕлнĕ**

Потребкоопераци: 120 çул

«Элĕк» ырă сунса кĕтет!

Элĕк райповĕ Чăваш потребкооперацийĕн 120 çулхи юбилейĕн çулталăкĕнче халăха паха парнепе савăнтарчĕ: райцентрта çĕнĕ суту-илÿпе пулăшу центрĕ хута ячĕ. Çак ятпа эрне кун ирттернĕ савăнăçлă уява, çанталăк сивĕ, çиллĕ тăчĕ пулин те, халăх питĕ нумай пухăнчĕ. Мероприятие Шупашкартан килнĕ сумлă хăнасемпе район ертÿçисем те хутшăнчĕç.

● *«Элĕк» центр çурчĕ.*

Икĕ хутлă, паянхи пурнăç ыйтăвĕсене шута илсе çĕкленĕ кермен аякранах курăнать, илемпе, хăйне евĕрлĕхпе илĕртет. «Элĕк» центр автостанци, культура çурчĕ, чиркÿ, пасар сывăхĕнчех вырнаçнă. Çавна май Элĕкре пурăнакансене кăна мар, ялсенчен тĕрлĕ ĕçпе килнĕ çынсене те кĕрсе тухма меллĕ.

Çуртра суту-илÿ уйрăмĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Кунта калăпăшлă сĕтел-пуканран пуçласа чÿрече каррисем, галантерея, тетте, парне, чечек таранах туянма пулать. Пĕрремĕш хутра – аптека пункчĕ. Хальлĕхе унта ача-пăчана ÿстернĕ чухне усă курмалли тата гигиена хатĕрĕсем сутаççĕ. Лицензи илнĕ хыççăн сиплевре кирлĕ препаратсем те туянма май пулĕ.

Иккĕмĕш хутра çутă та анлă пÿлĕме «Вкусно-Пицца» кафе валли уйăрнă. Ăна яппун халăхĕн апатлану культурине шута илсе хăтлăх кĕртнĕ. Кафере тутлă пицца кăна мар, яппун нации апат-çимĕçне тутанса пăхма та, уявсем ирттерме те пулать. Сăмах май, Элĕк райповĕ юлашки çулсенче халăха канма, пурнăçри тĕрлĕ пулăма палăртма условисем туса парас, кафе-столовăйсене çĕнĕ сăн кĕртес тĕлĕшпе тĕллевлĕ ĕçлет. Райпо канашĕн председателĕ, Элĕк район депутачĕ, ЧР халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерес сферăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Юрий Харитонов уявра çĕнĕ лавккасемпе общепит предприятийĕсем уçас ыйтусемпе малашне те тăрăшасса палăртрĕ.

– Паян пирĕн пысăк уяв – çулталăк çурă каялла тума пуçланă центр хăнасене йышăнма хатĕр. Хастар ĕçленĕшĕн строительсене тав тăватăп. Илемлĕ керменре ăшă, çутă, тавар ассортименчĕ пуян. Районшăн паха пулăмсен шутне кунта эпир 25 çĕнĕ ĕç вырăнĕ йĕркелеме пултарнине те кĕртес килет. Халăхшăн ку ыйту уйрăмах пĕлтерĕшлĕ, – терĕ Юрий Александрович. – Унсăр пуçне центр çуртĕнче арендаторсене те хăтлă лаптăксем уйăрса паратпăр. Хальлĕхе 12 арендаторпа килĕшÿ турăмăр ĕнтĕ. Центр тулли хăватпа ĕçлеме тытăнни район бюджечĕшĕн те усăллă пулĕ – налуксем ытларах куçарса парăпăр. Хисеплĕ ентешсем! Сире уявпа саламлатăп, çирĕп сывлăх, хавхалану, ăнăçу сунатăп, çĕнĕ центр ĕçĕ кăмăла каясса шанатăп.

Чăвашпотребсоюз Канашĕн председателĕ, Раççей Центрсоюзĕн Канашĕн членĕ, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Валерий Павлов пухăннисене сывхарса килекен Çĕнĕ çулпа саламласа ăнăçу сунчĕ.

– Элĕк райповĕ республикăра кăна мар, Раççей Федерацийĕн Центрсоюзĕн тытăмĕнче те чи лайăх потребительсен обществисенчен пĕри, – палăртрĕ Валерий Михайлович. – Унта ĕçлекен пултаруллă çынсем тăрăшнипе вăл çултан çул аталанса пырать, ялсен социаллă пурнăçне лайăхлатма витĕмлĕ тÿпе хывать. Çĕнĕ комплексра та тавар туянакан яланах нумай пултăр, халăх унăн ĕçне ырăпа хаклама пултартăр.

Элĕк район пуçлăхĕ В.Х.Дубинин, райадминистраци пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Л.М.Никитина, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ В.П.Мидуков, пайçăсен ячĕпе Н.М.Сергеев салам сăмахĕ каларĕç. Вĕсем райпо канашĕн ертÿçи Ю.А.Харитонов пуçарнипе районта пархатарлă чылай пулăма пурнăçа кĕртнине асăнчĕç, ăна, райпо коллективне, Чăвашпотребсоюз ертÿçисене ÿсĕмсем сунчĕç. Çĕнĕ çурта тунă подряд организацийĕн – «Мастер» тулли мар яваплă обществăн – генеральнăй директорĕ Р.А.Ахметов Ю.А.Харитонова центрăн символ ÿçкине пачĕ.

Алăк уменчи хĕрлĕ хăйăва каснă хыççăн пурте кермене кĕчĕç, курса çÿрерĕç, тавар туянчĕç. Иккĕмĕш хутра райпон общепичĕ, çăкăр завочĕ, пахча çимĕç комбиначĕ, Етĕрнери аш-какай комбиначĕ, «Акконд» фирма, ытти партнерсем хăйсен продукцийĕн курав-дегустацине йĕркеленĕ. Уяв программи анлă пулчĕ: чăваш эстрада юрăçисен концерчĕ, лотерея вылявĕ, акцисем, конкурссем пухăннисене уйрăмах кăмăла кайрĕç.

■ **Алина ЛУКИЯНОВА.**

Юрий КОРНИЛОВПА автор сăн ÿкерчĕкĕсем

● *Уяв саманчĕсем.*

Сывлăх сыхлавĕ

Çĕнĕ тепĕр ФАП

Раштав уйăхĕн 11-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи Кăшавăш ялĕнче савăнăçлă лару-тăрура фельдшер-акушер çуртне уçрĕç.

– Ăна тума хыснаран 5,6 миллион тенкĕ уйăрчĕç, – терĕ район больницин тĕп врачĕ Михаил Алексеев. – Строительсем еплерех ĕçленине пĕрмай тĕрĕслесе тăтăмăр. Çурт проектне кăштах улшăну кĕртрĕмĕр. ФАПра вăй хуракансемшĕн, пациентсемшĕн çурт меллĕрех пултăр терĕмĕр. Чăн та, ял шайĕнчен пăхсан вăл пысăккăн курăнать. Хальлĕхе кун пекки Кăшавăшра тата Патăрьел районĕнчи пĕр ялта çеç. Вăл Кăрмăш, Кăшавăш, Вăрăмту, Котяк, Сопаккасси ялĕсенчи 1603 пациента йышăнать. Пункт заведующийĕ – Анна Степановна Карамаева акушерка. Вăл сывлăх, сыхлавĕнче 42 çул ĕçлет.

Тултан та, шалтан та хăтлăлатнăскер, ФАП çуталса тăрать. Районти ФАПсен заведующийĕсем пациентсене, уйрăммăн илсен ача амăшĕсемпе ачисене, йывăр тата ача çуратас кăмăллă хĕрарăмсене йышăнмалли, прививка-укол тумалли, суран-юхана сиплемелли, хывăнса тăхăнмалли, апатланмалли, çăвăнса тасалмалли пÿлĕмсене кĕрсе курчĕç. Пуринче те çутă, ăшă. Сивĕ, вĕри шывпа, холодильникпа, телефонпа тивĕçтернĕ, медицина оборудованийĕ, сĕтел-пукан вырнаçтарнă.

Йăмшакланнисене, ал-урана ĕç хатĕрĕпе суранлатнисене васкавлăн пулăшаççĕ. Лидия Трубина медсестра ФАПра кăçал çеç ĕçлеме тытăннă пулин те ял тăрăхĕнчи пациентсемпе хăвăрт пĕр чĕлхе тупнă. Кÿршĕ ялта çуралса ÿснĕскер медицинăра 1986 çултанпа, ĕç опычĕ пысăк. Пунктра пулăшайманнисене çийĕнчех е Кÿкеçе, районăн тĕп больницине, е Шупашкара ăсатаççĕ. Ял тăрăхĕнчи ача-пăча сывлăхне тĕрĕслеме, сусăрриссене сиплеме ФАПа Маргарита Мускаринова врач-педиатр килсе çÿрет. Сăмах май, вăл пăхса тăракан ялсенче кăçал пĕлтĕрхинчен 10 ача нумайрах çуралнă. Галина Иванова санитарка хăйĕн тивĕçне тăрăшса пурнăçлать.

– Хăш-пĕр пациент эмел туянма Шупашкара е Кÿкеçе каяймасть. Ăна кунтах сутаççĕ, – терĕ районăн тĕп больницин аслă фельдшерĕ Алевтина Окликова журналистсене кашни пÿлĕме кăтартнă май.

Алевтина Павловна – тĕп врач пулăшуçи. Кăшавăшра ФАП хута ярас тĕлĕшпе нумай вăй хунине ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Сергей Мульдияров уява хутшăннисен умĕнче пайăрласах палăртрĕ.

ЧР медицинăри вăтам специалистсен ассоциацийĕн президенчĕ Ванда Викторова, ЧР фельдшерсен канашĕн председателĕ Татьяна Игнатьева Кăшавăшра паянхи пурнăç ыйтнипе килĕшсе тăракан ФАП уçнăшăн савăннине пĕлтерчĕç, пĕчĕк коллектива çынсен сывлăхĕшĕн çине тăрса ĕçлеме вăй-хал сунчĕç. ФАПпа юнашарах – вăтам пĕлÿ паракан шкул.

– Пуян оборудованиллĕ, ĕçлеме пур услови те çителĕклĕ. Врачсем графикпа килсе çÿрекен пункт ĕçлеме пуçланăранпа ачасен сывлăхне тĕрĕслеме, çирĕплетме çăмăлланчĕ, – терĕ шкул директорĕ Геннадий Васильев. – Икĕ учреждени хушшинчи çыхăну çирĕплленессе шанатăп.

Районăн тĕп больницин тĕп врачĕ Михаил Алексеев хăйĕн умне кашни çул евроюсав ирттерсе хăтлăлатнă е пĕр вĕр çĕнĕ ФАПран сахал мар уçма тĕллев лартнă. Сăмаха çилпе вĕçтермест Михаил Николаевич. Палăртнине пурнăçлама ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви çеç мар, район администрацийĕ те укçа уйăрнине палăртмалла.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**

Самана таппи

Инноваци çул-йĕрĕпе

Красноармейски районĕнчи «Таябинка» агрофирма – çĕнĕ технологисене производствăна хăюллăн кĕртсе инноваци çулĕ-йĕрĕпе шанчăклăн аталанакан çирĕп хуçалăх. Вăл, республикăри «100 чи лайăх ял хуçалăх предприятийĕ» клубăн хастар членĕ, пĕлтĕр экономика-финанс кăтартăвĕсемпе 12-мĕш вырăн йышăннă.

Тулли мар яваплă общество Вăрнарти ашкакай комбиначĕ валли пин-пин пуç сысна самăртать. Хăйсен комбикорм цехĕнче авăртса выльăхсене çитермелĕх те, сутлăх та тĕш тырă çитĕнтерет. Пысăк лаптăкра çĕр улми туса илет, республикăри хуçалăхсене паха вăрлăхпа тивĕçтерет.

Агрофирмăна Александр Петрович Афанасьев директор чылай çул ăнăçлă ертсе пырать. Унпа темиçе те тĕл пулнă эпĕ. Сăпайлăскер ялан-хи пекех ООО çинчен каласа пама килĕшмерĕ. Хальхинче тĕп агрономпа Елена Николаевăпа курнăçма сĕнчĕ.

– Елена Владимировна, малтан хăвăрпа паллаштарсамăр.

– Эпĕ çак районти Тусай ялĕнче çуралса ÿснĕ. Чăваш патшалăх ял хуçалăх академине пĕтернĕ. Манăн атте те агроном пулнă, пĕр вăхăт колхоза та ертсе пынă. Эпĕ, çамрăк специалист, тăван хуçалăха таврăннăранпа вăл тивĕçлĕ канăва тухичченех тĕп экономистра ĕçлерĕ. Мана çине тăрсах пулăшса-вĕрентсе пычĕ, пурнăç опычĕ унăн пысăкчĕ. Кунта киличчен «Досаево» хуçалăхра вунă çул тĕп агроном пултăм. Çак тивĕçе агрофирмăра кăçалхи ака уйăхĕнчен пуçласа пурнăçлатăп, унччен вăрлăх туса илес енĕпе ĕçленĕ. Манăн вырăна Ольга Козлова йышăнчĕ.

– Ял хуçалăх культурисем туса илес отрасле çине тăрсах аталантарни агрофирмăна епле витĕм кÿрет?

– Выльăх апатне вырăнтах хатĕрлени унăн хăй хаклăхне йÿнетме май парать. Сысна ĕрчетес, тыр-пул, çĕр улми туса илес тĕллевпех 2004 çулта çĕнĕ фирма йĕркеленĕ те. Чи малтан 200 гектар çеç çĕр пулнă. «Таябинка» усă курман лаптăксене çулсерен 200-300 гектар хушăнтарса пырса уй-хире 3500 гектара çитерчĕ. Районта пусă çаврăнăшне кĕртмен çĕр сахалланчĕ. Вăл та пулин инçетре. Эпир халĕ ака-суха тăваканни те вăтамран 16 çухрăмра вырнаçнă. Техника хăваласа самаях тăкакланатпăр.

– Çĕр пулăхне ÿстерес, тăпра тытăмне лайăхлатас тĕллевпе мĕнле ĕçсем пурнăçлатăр?

– Тăпрара азот, фосфор е кали мĕн чухлĕ пуррине кура пĕрчĕллĕ удобренипе виçеллĕ усă куратпăр. Çĕр улми лартма палăртнă уя кăçалтан тислĕк кăларма тытăнтăмăр. Çĕре мĕнле пăхатăн – тухăç çавăн пек илетĕн. Вăл пĕлтĕр 29 центнерпа танлашнăччĕ, 2013 çулта – 26. Кăçалхи çанталăка кура ку кăтарту пирĕншĕн япăх мар.

– Çитĕнÿре механизаторсен тÿпи те курăмлă-тăр?

– Паллах. Вĕсем пирĕн тăхăрăн. Анлă профильлĕ, кирек мĕнле техникăпа та ĕçлеме пултараççĕ. Владимир Иванова илер акă. Хушнине яланах вăхăтра пурнăçлать. Вĕсене вырмара преми хушса пани те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Техника çителĕклĕ, чылайăшĕ çĕнĕ. Хире 4 комбайн тухрĕ. Çанталăк çумăра кайиччен йăлт вырса пĕтерчĕç. Комбайнерсем тăваттăшĕ те районта мала тухрĕç. Олег Васильев вара 2 пин ытла тонна тырă тĕшĕлесе республикăра та палăрчĕ.

Ĕçе комплекслă майпа йĕркелетпĕр. Пĕрисем тырă вырнă вăхăтра теприсем хыççăнах çĕртме турĕç, виççĕмĕшĕсем çĕр улми аврине çулчĕç. Кĕрхисене 1240 гектар акрăмăр, плана 124% тултартăмăр.

– Çĕр улмине йăлтах кăларма ĕлкĕртĕр-и?

– Кăштах юлчĕ. 3 комбайн уяр вăхăтра икĕ сменăпа кăмăсăр ĕçлерĕ. Тухăç гектартан 199 центнерпа танлашрĕ. «Невский» 40 гектартан 360-шар центнер тухрĕ. Кăçал хакĕ пур. Çавăнпа çĕр айне юлнă «пуянлăх» тăкакне саплаштаратпăрах пулĕ тетпĕр.

– Елена Владимировна, çитес çул валли мĕнле тĕллевсем палăртатăр?

– 2014 çулта та çĕр улми лаптăкне пĕчĕклетесшĕн мар. Тюменьрен çĕнĕ сортлă вăрлăх 140 тонна туянса килтĕмĕр. 300 гектар çинче куккурус пĕрчĕлĕх акасшăн.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ калаçнă**

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
пĕлтерÿ реклама
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пÿлĕмре йышăнаççĕ.

Ядринская районная администрация Чувашской Республики согласно постановлению № 977 от 16.12.2013 г. в 10-00 часов 21 января 2014 г. проводит открытый аукцион по продаже в собственность и предоставлению в аренду земельных участков категории "земли сельскохозяйственного назначения":

Лот 1. Продажа права на заключение договора аренды земельного участка (годовой размер арендной платы) для ведения сельскохозяйственного производства, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Ядринский район, правый берег р. Сура, 51.5 км, в кадастровом квартале 21:24:130308, севернее д. Сареево, с кадастровым номером 21:24:130308:365, площадью 30000 кв.м.; начальная цена 98000 руб.

Лот 2. Продажа права на заключение договора аренды земельного участка (годовой размер арендной платы) для ведения сельскохозяйственного производства, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Ядринский район, с/пос. Николаевское, с кадастровым номером 21:24:000000:2349, площадью 58145 кв.м.; начальная цена 14929 руб.

Последний срок приема заявок 17.01.2014г. Оформление заявок и дополнительная информация по адресу: г. Ядрин, ул. 30 лет Победы, д. 1, каб. 215, тел. (883547)22-4-33 и на официальном сайте Ядринского района www.yadrin.cap.ru в разделе объявления.

Администрация Батыревского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельных участков из земель сельскохозяйственного назначения, для сельскохозяйственного производства в аренду сроком на 49 лет:

- с кадастровым номером 21:08:000000:3572, площадью 93923 кв. м., местоположением: Чувашская Республика, р-н Батыревский, с/пос. Бикшикское;
- с кадастровым номером 21:08:100402:95, площадью 2411 кв. м., местоположением: Чувашская Республика, р-н Батыревский, с/пос. Бикшикское.

Заявки принимаются в течение месяца по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, село Батырево, пр. Ленина, д. № 5, каб. № 7. Телефоны для справок: 8(83532)61426, 8(83532)6-13-60.

ПРОДАЮ

25.Гравмассу, керамблок, песок, щебень. Д-ка. Т. 89023277585.

842.Срубы для бани. Т. 37-28-74.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрацинелĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800,
"Хыпар"-шăмат кун" – 78353,
"Çамрăксен хаçачĕ" – 54804,
"Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515,
"Сывлăх" – 11524,
"Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ /директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор А.П.МИХАЙЛОВ

ТЕЛЕФОНСЕМ
Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайĕсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-22-31, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренÿ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ: 28-83-70 – рекламăпа пĕлтерÿсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Çĕ кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.
Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта: pop408@rambler.ru hypar@mail.ru
Хаçата "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă, "Чăваш Ен" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.
РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРÛСЕНЕ 316-мĕш пÿлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерÿсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тÿлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшÿллĕн "Аталану сулĕпе", "Ят-сум", "Çĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7006. Заказ 4423.